41790

Николай ИСМУКОВ

# Астивсе кимелёк

Национальная библиотека ЧР
4-041790

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К84.09(=Чув)
И87

Обязат. экз.

К

*Николай Исмуков*

# Астивсе илмелӗх

**ҪЫРНИСЕН ПУХХИ**

**ТӐВАТТӐМӖШ ТОМ**

кф

*Шупашкар*
*2006*

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-5
И 85

# Астивсе илмелĕх

## ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

### ТĂВАТТĂМĔШ ТОМ

«Астивсе илмелĕх» кĕнекене, тĕпрен илсен, тĕрлĕ çулсенче çырнă тăватйĕркесене пухса хатĕрленĕ. Унта çĕнĕрен çырнă хайлавсемпе пĕрлех малтанхи виçĕ тома кĕнĕ хăшпĕр шухăшсем те тĕл пулаççĕ.

Чăваш халăхĕн ăс-хакăл çӳпçинче Анăçпа Тухăç (Анăç – шухăш, Тухăç – ӳкерчĕк) сиплешнĕ туприсем те сахал мар. Вĕсене суйласа хальхи поэзи шайне çитересси – пирĕн тивĕçĕмĕр.

2-41790
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Исмуков Н., 2006

ПРОВЕРЕНО
2010

## ПАТШАЛĂХ ПРЕМИНЕ ПАНĂ МАЙ КАЛАМА ХАТĔРЛЕСЕ ХУНĂ СĂМАХ

Сăвва тăтăшрах савăнăçлă вăхăтра вулаççĕ. Эпĕ вара ăна ытларах ăшчик вырăнта мар чухне вулатăп, чунăмри «тĕнче тунсăхне» сирмешкĕн çыратăп. Тепĕр чух пĕрер йĕрке ăнăçлă сăвă çыратăн та, шăрăх кун çăл шывне сыпкăм-сыпкăм ĕçсе илнĕ пек, лăштах пулатăн, лăпланатăн. Тĕрĕсмарлăхпа элек-мелек умĕнче те хăвна вăйлăрах туятăн вара. Çакăнта мар-и поэзин тĕп тĕллевĕ?! Эккей, — чун-чĕрене ыраттарса тасатса сиплемелли эмел иккен вăл поэзи тени. Мэтью Арнолд «мир спасет поэзия» тенĕччĕ пулас. Тĕнчене çăлаймасан та, мана вăл халиччен çăлса пычĕ-ха. Акă паян та вăл мана, чĕркуçленме, пăхăнма, йăпăлтатма пĕлменскере, çак хисеплĕ вырăна илсе çитерчĕ.

Поэзи — кирек мĕнле влаçăн та пĕрпеклĕх, пĕршухăшлавлăх политикипе килĕшмесĕр хăвна хăв упраса хăвармалли шанчăклă меслет. Ытти çынсем пек шухăшласа, çырса, вĕсен пурнăçĕпе пурăнса ирттерĕн-и пĕр хутчен çеç панă ĕмĕрне...

Сăвăçăн, паллах, халăх чĕлхине лайăх пĕлмелле. Тен, унран кăшт маларах та пымалла. Кая юлса пырсан, иртнĕ ĕмĕрте тăрса юлăн, ытлашши мала кайсан, çухалса кайăн. Пур япалан та виçи пур-çке. Илĕр-ха, сăмахран, «Тилли юррисене». Шелепи ун евĕрлĕ хай-

лавсене халăхăн куллен-кунхи (обыденный) чĕлхипе çырнă. Хусанкай вара, селемçĕ хаклă чула якатса илемлетнĕ пек, кĕмĕл кăшăл çине вырнаçтарнă, чăн-чăн поэзи шайне çĕкленĕ. Эхер те Митта Ваçлейĕ «Каттис Мишши юррисене» йĕркелесе пĕр çавра кăшăл çине вырнаçтарнă пулсан, эпир паян «Анатьен ахахне» вуласа савăнаттăмăрччĕ. Шел, пăхăнманлăх çулĕпе çӳресе, Миттан çак ĕçе вĕçлеме вăхăчĕ юлмарĕ пулас... Вырса пăрахнă, анчах кĕлтене кĕреймен ыраш, улăм çех. Шухăшăма вĕçлесе çавна калам. Хусанкайăн «Тилли юррисене» çитекен çаврăм чăваш историйĕнче текех пулмĕ те. Тепĕр тесен, «Рафаэлăн «Мадонни» иккĕ пулма пултарать-и тĕнчере!

Пирĕн аслă поэтăмăрсенчен вĕренмелли нумай. Анчах пĕр япаланах темиçе хут калани çынна ватăлтарать. Кашнин хăйĕн çулĕ пулмалла. Каялла çулта та пĕр-пĕр илемлĕ çаврăм куç тĕлне пултăр. Юлашки вăхăтра поэзи философи еннелле туртăннине палăртрăмăр эпир. Тĕнче ăс-хакăлĕн юхăмне хирĕç каяймăн. Анчах кашни халăхăн хăйне евĕр философийĕ, ăна поэзи çунаттисем çине лартса тӳпене çĕклесси — пирĕн тивĕçĕмĕр. Вăй çитнĕ таран. Ун пек сăвăсенче шухăшĕ те, туйăмĕ те виçеллĕ пулмалла. Картран тухсан, поэзии пĕтет. Ăçта вĕсен шайлаштарăвĕ? Писменĕ — поэт чунĕ.

Философилле поэзине аталанма Чăваш çĕршывĕ ăнăçлă çĕре, Анăçпа Тухăç культурин чиккине вырнаç-

нă. Анăç — шухăш, Тухăç — ӳкерчĕк. Анăç — уйрăмлăх, Тухăç — пĕрлешӳлĕх. Ман шутпа, вĕсен пахалăхĕсене сиплештерсе каласа пама рубаи капашĕ шăпах та вырнаçуллă пек туйăнать. Ку меслетпе чăваш сăвăçисем усă курман мар. Рубаи — сăвăрса кăларнă çаврăм шухăш, поэзи картне лартнă чăваш сăмахлăхĕ, халăхăмăрăн кăмăл-сипечĕ. Унта, паллах, тĕнче культурин пахалăхĕсене те хĕсĕрлемесĕр усă курмалла. Турри мĕн чухлĕ панă, çавăн чухлĕ пултарулăхпа хайларăм çак «Тăватйĕркене». Ырсунансем ăна ырă сунса вулаччăр. Кĕвĕçсе-вĕчĕхсе-йӳçĕхсе тăракан путнă куçлă сăвăç та вулатăр ăна. Урапа шĕкĕлчисем хушшине патак чиксе тăракан çынна та тав тумалла тепĕр чух.

Яш-кĕрĕм пасара каять, эпĕ ĕнтĕ каялла кайма тухнă. Сутмашкăн мулăм çук, илмешкĕн кĕмĕлĕм çук. Пăхса çӳренипех тĕлĕнтĕм. Ăçта вăл, мĕнре вăл пурнăç тупсăмĕ? Элле пирĕн пурнăç, çырла пуçтарнă пек, çылăх пуçтарса çӳрени çех-ши? Çак ĕмĕрхи ыйтăва явап пама аваллăх алăкне уçатăн, несĕлсен кăмăлне, вĕсен хӳхлевне хальхи вăхăта илсе çитеретĕн. Вара кĕтмен çĕртен çакна асăрхатăн: эпир халиччен те вĕсен пурнăçланман ĕмĕчĕсемпе, ӳпкевĕ-йăнăшĕсемпе пурнатпăр-çке? Çак усал тĕнчене ырăрах тума килнĕскерсем, эпир ăна çаплипех усал хăваратпăр. Атăл хĕрринчи виçкĕтеслĕхе вырнаçнă тĕрме те, пульница та, чиркӳ те килес ăру валли юлать... Çапах та тăхăмсен асĕнче çынна ырă

тунă ĕçпе юласчĕ. Ламран лама çапла пытăрччĕ. Тен, пунăç тупсăмĕ те çавăнта çех...

Ыр ту та çынна, ун çинчен манса кай эс,
ыр çын,
Пăрах шанчăкна Атăла, нимех те ан кĕт эс,
ыр çын.
Ытарлă ыран-и е тепĕр вун çичĕ çултан-и, —
Пĕрех сан патна таврăнать вăл — ĕнен эс, —
ыр çын.

1998 ç.

# «КАҪХИ АТӐЛ» ЯРӐМРАН

## Астивсе илмелĕх

Пĕр лаптăк Ази хăйăрĕ. Хăвалăх.
Сĕвекленсе пыран çыран çине
Хум хăвалать чуна хырса çумалăх
Качи-мăчи пек вĕтĕ чулсене.

Унтан-кунтан килен прожектор евĕр,
Мĕн шыраса çаплах куçа-куçа,
Юрлаççĕ шăпчăксем таса та евĕк
Пайла-пайла çак пархăтлă каçа?

Кунтах йăмра, тăрри Альгеш тĕрри пек.
(Аçтан сăмахĕ килчĕ чĕлхене?)
Мĕлкийĕ, путса вилнĕ хĕр кăтри пек,
Шывра юлхавлăн, лăпкăн чўхенет.

Шăпа саккунĕн – Соломон сехечĕн
Калекĕ сулăнать калле-малле:
Иртет иккен, иртет тĕнче реххечĕ,
Апла иртмен инкек те иртмелле.

Ытла кĕске çак ĕмĕр – ак! темелĕх
Ĕлкĕриччен ахаль калаçура
Мари енчен тухать те чўк хĕвелĕ
Вар çаврăнса анать Карачура.

**Кайсах пырать черетлĕн мĕн килнийĕ –
Нимех те ыйтас çук каян хумран:
… Те вăхăт, те вăл браконьер киммийĕ
Тăрук шуса çухалчĕ ман умран?**

**2005 ç.**

## Астивсе илмелĕх

Пурах иккен хăвачĕ пыл-сăран:
Сыпса-сыпса парсассăн ăстрăм-ăстрăм,
Йăлăхтарса çитернĕ прозăран
Йăлтам поэзи тĕнчине эп пусрăм.

Масар шăршиллĕ тирексем, инçе
Юлăрсамах Исмаэлран та вată
Шур Шупашкарăн пĕр кĕтессинче.
Умра халь чун уççи хавallă Атăл.

Хумсем çапса кăларнă тункаta
Пирус туртса кăштах ларса канма та,
Черкке лартма та меллĕ, тупата,
Тавсси, тавсси, ытарайми ман Атăл!

Июнь çинче шĕпĕлтетен хумсем
Мăсăльмансен сăпай арăмĕсем пек
Ман урана çăваççĕ, çунăçем
Калла чакаççĕ, – ĕрехмет, исянмэ*

Асаилӳ пĕр вĕççĕр тăсăлать,
Малĕмĕтĕм вара кĕске-çке питĕ.

* Исянмэ – тутарларан: сывлăхлă пулăр.

**Мӗн вӗçтерес пӗр уссăр сăсăла –**
**Çапла пӗрмайлă пурăнни те çитӗ.**

**Анчах мӗн-ма эс, канăçлăн кашлан**
**Пӗртен пӗр пуплекенӗм каçхи Атăл,**
**Хурах* шыва пăрахнă перс-княжнан**
**Хура куçӗсемпе мана пăхатăн?..**

**2005 ç.**

* Степан Разин.

## Астивсе илмелĕх

Латинла «profani procul ite
Huc amoris locus sacer est»*
Чăвашла ăна калас килет те, –
Чĕлхене хитре сăмах килмест.

Тымарла чулран, йĕке ураллă
Шурă карлăк çумĕпе пĕччен
Иртейсе пыратăп çур çавраллă
«Юрату сăмсахĕ» умĕнчен.

Ĕлĕкрех, пĕррехинче, çаплаччĕ:
Çаруран çӳренĕ пек Христус,
Хăйăр çийĕн тăлăх йĕр юлатчĕ –
Çылăх çукчĕ, çукчĕ савнă тус.

Мăшăршарăн çӳрени илемлĕ,
Шăкăл-шăкăл калаçнийĕ те…
Сăр ăсти Сизов тытса илеймĕ
Çак таса, асамлă сехете.

Хĕрупраç епле чипер юсаннă,
Шурă платье çийĕн шур çуха…

* Кайăрах кунтан, юратма пĕлменнисем, – Ку вырăн – ĕмĕрлĕх таса.

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

## Астивсе илмелĕх

**Сив куçпа ан пăхăр, ан ăмсанăр,**
**Ăмсансан – савни те куçăхать.**

**Çакăнта-мĕн вată Шупашкарăн**
**Ĕмĕр çамрăк вырăнĕ иккен.**
**Çырулла, кĕске çеç сăмахшарăн**
**Карлăка чĕрет мĕн килекен.**

**Тĕлпулу та уйрăлу сăмахĕ,**
**Чĕрене тирен çинçе çĕмрен…**
**Мĕнле чăтрăн, «Юрату сăмсахĕ»,**
**Тата мĕнле чăтăн ўлĕмрен!?**

**Куçхарши сăррисемпе çак ырă**
**Йăлана тытам кăна тесе,**
**Юратма пĕлменнисем, ан çырăр**
**Хусанкай таяннă кĕтесе.**

**2005 ç.**

Ача пек Атăл тĕлĕкне кĕрсе
Сайра хутра çÿрен пăрахутсем
Пăсмаççĕ-и касхи ÿкерчĕке?...
Çÿрĕçинех, ара, пĕреххутчен.

Пĕли-пĕлми йăр-яр сăрланă пек
Шевлен-шевлен ÿкет те ГЭС çути
Ылтăнланса-кĕмĕлленсе çитет
Вуткайăкла Шупашкара çити.

Каç сĕмлĕхне çунат вĕçпе чĕрсе
Ман умранах вĕлт турĕ пĕр чарлан.
Камран хăрас, кама ман ăмсанас? –
Турри мана та вĕлт вĕçме чарман.

Тÿлек хумсем çине ÿпне выртса
Тÿлек шухăшăмсем йĕркен-йĕркен
Сăвăланса тухаççĕ çырана, –
Суйла-суйла сума çеç ан ÿркен.

Чул тусанне хум çĕклесе илет,
Илет те каялла сулать ăна.
Иртнисене, ăнман кунăмсене
Çуса илмест вăл – пăтратать кăна.

**Иккен, илемлӗх чунӑмра анчах:**
**Ҫак тараватъ каҫа пӑхмасӑрах**
**Аса-илӳ чуна хускатиччен**
**Кунтан, тен, каймаллаччӗ паҫӑрах…**

**2006 г.**

Çул юппинче тăран пĕр юланутçăн
Кăнтăрлапа хĕвел тăп чарăнать.
Вара, кăштах иккĕленсе илет те,
Васка-васка анăçалла анать.

Элле иртсе те кайрĕ-шим хĕрӳлĕх? –
Тин ăшăнса çитет-çке çут Пăла!
Элле иртсе те кайрĕ çамрăк вăхăт
Шухăшăмран та шухă утпала…

Хĕвеллĕ кун ĕмĕрлĕхех пуль теттĕм –
Çук, тăнăç мар, шанăçлă мар тĕнче.
Çурта çунса пĕтмесĕр сӳннĕ евĕр
Тĕксĕмленет, ав, Шетмĕ леш енче.

Кунçул вĕçне çитсен тин савнă мăшăр
«Сана савман эп» тенĕн, анăра,
Хĕвел тăрук, тăрук анса ларать те
Хальччен эп пурăнман пекех вара.

2006 г.

## Астивсе илмелĕх

Пăрçа хирне пытаннă ман ачалăх,
Ман çамрăклăх пытаннă улăха.
Вăййи-куллийĕ юлчĕ асăнмалăх,
Вăй уçланки çех юлчĕ тăлăха.

Саркайăк, вĕл вĕçсе ăçта ăсантăн,
Ăçта çухалтăн эс, утмăлтурат?
Куçа уçсан та, куçăма хупсан та
Ман ĕлĕкхи савни умрах тăрать.

Халь ĕнтĕ çук тĕкĕлтураллă улăх,
Пăрçа хирне те пуснă талпиçен.
Тавралăхăм, епле танлаштаруллă
Сăмах тупса çухатăвна виçем.

Шаланкă та вĕçсе иртмест ку яхăн,
Чунра темскер чĕрне пек чĕрĕнет.
Шур хĕррипе хăрса пыран хăяхăн
Çĕçси касса та кĕчĕ чĕрене.

2005 г.

2-41790
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА

## НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

### Астивсе илмелĕх

Адам чухнехи виноград авăнать, явăнать,
Чĕвен çĕкленсе вăл пăхать те пăхать кантăкран.
Кăтра виноград, каскăн шухăшăма ан хускат –
Ахаль те мана çырă хут янă пуль тамăкран.

Сĕтелĕм çинче çинçе мăйлă çўхе кăкшăмра
Юна шĕветен Вифлеем юнĕ тĕслĕ шерпет
Таçти ĕмĕртен килекен хăватне, тен, упрать?
Сыпса панăçем мана мар – тĕнчене ўсĕртет.

Пĕр пĕчĕк пахча –
сĕр çинчи тăп-тăваткăл çăтмах.
Чăпар кайăксем савăнаççĕ июнь куллипе.
Улма сĕнекен çĕлентен сыхланмашкăн вара
Пилеш те эп лартнă унта чăвашсен йăлипе.

Епле ытарми çутçанталăк, епле ытарми!
Пурне те, хура чечеке те савассăм килет.
Хура çивĕтне çиччĕлле явласа, Ытарпи,
Пĕр пек рифмăпа тўлесе хăварассăм килет.

Пиçсе çитекен виноград пек чарусăр куççем,
Ан сăнăр мана, сăрласа ан ўкерĕр мана –
Халь тин ĕнтĕ эпĕ кĕреймĕп ўкерчĕксене,
Халь тин тĕнчере эп – пăхса тăраканĕ кăна.

2005 ç.

# ВĂХĂТ ВИТĔМĔ

**Сар хурăнлăх çумĕпеле пур**
**хырлăх та,**
**Сар савăнăç çумĕпеле пур хурлăх та.**
**Эс вĕсене астивеймен пулсассăн,**
**Йăлтах эп куртăм пурнăçра теме тăхта.**

Эп Вăхăта шурă пĕлĕт тесе ĕненеттĕм,
Пуç тăрринчен шуса иртĕ те кайĕ тееттĕм.
Ах, Шурă пĕлĕтĕм — Шур кăвакарчăн вĕçевĕ —
Шух пуçăма шуратса иртрĕн те иртрĕн вĕçе-вĕç.

Мĕн хăвăрт иртет çакă çут тĕнчере? —
калăрсамăр мана.
Яр çиçĕм çиçет те ўкет хурамаллă хура вăрмана.
Анчах çиçĕмрен çичĕ хут иртгерет çамрăк вăхăт:
Эй, аллăрисем, камах сиссе юлчĕ ăна, —
калăрсамăр мана.

Ан ыйт ытлашши —
кивҫен парас ҫук Пихампар,*
Анчах та хӑвна тивӗҫсен
вӑхӑтна та ан пар.
Ҫак ҫут тӗнчере мӗн пурри
пӗтӗмпех-мӗн виҫеллӗ:
Мӗн чухлӗ кун панӑ пире,
ҫавӑн чуль пурӑнар.

* Чӑвашсен аслӑ турри

Шурă çӳçлĕ кăлкан хирĕпе
вĕçтерсе иртрĕ тейĕн хасар –
Иртсе кайнă кунсем
халĕ ĕнтĕ тусанлă, саланнă пасар.
Вăрăм-вăрăм йĕрке,
рифмăсем аякра-аякра.
Ирĕк, ирĕк! Халь тин, ватăлсан,
эсĕ маншăн таварсăр пасар.

Ҫирӗммӗш ӗмӗр!
Ăна эн ӗшеннӗ пуль теттӗм, —
Ҫул вӗҫӗнче те, ҫук, ҫук! —
ывăнман урхамах.
Тӗпсӗр ҫырма умӗнче вăл
тăпах чарăнать те —
Кӗмӗл ҫилхи йăванать
ҫулнă ҫаран пек, лапах.

Иртнĕ кун шăтăка, çĕр тĕпне,
çылăх евĕр тĕртет те тĕртет,
Пуласси, и тăван, те вăл тур аллинче,
те чăнах та, пирте...
Ак çапла ĕмĕтпе асилӳ хушшинче
хĕсĕнсе пурăнатпăр,
Ак çапла ĕмĕтпе асилӳ хушшинче
пирĕн пурнăç иртет.

Мĕнле çитĕнӳ? —
шăхăрса иртсе кайрĕ ку çул.
Тата тепĕр çул
уйăх пек калса юлчĕ кун-çул.
Виçесĕр, чăрмавсăр,
чарусăр юхан аслă Вăхăт,
Сана Турăсем те
тытса чараймаççĕ ку чух.

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

## Астивсе илмелĕх

Каялла тăвалла çаврăнса пăхрăм та
пурнăçа,
Пурăнман та пекех пурăнса пĕтерен
пурнăçа.
Мĕн курни, мĕн пулни,
савăнни, хурланни —
Пĕтĕмпех пĕр самант асаилӳ черккине
вырнаçать.

Ача пек таса ирхине те
тăп-тăр кăнтăрла та
Мĕн-ма чӳрече каррипе
хéвеле хупăрлатăр?
Элле ăнланмастăр? — тăван пĕтенӳ
виç кунтан таптаса пытарсассăн,
Шуйттан тĕнчинче — сĕмлĕхре
сĕм яланлăх юлатăр.

Савăн,
    сывлăх çăл пек тапса тăнă чухне,
Савăн,
    савнă тусу сана савнă чухне.
Пĕр тумлам сывлăм пек эрехне те ĕçеймĕн
Пуç вĕçне
    ярăнса вилĕм аннă чухне.

Мĕн вăл сан пурнăçу?
— кĕлчечекĕ кăна.
Кĕлчечекĕ те мар,
ун тусанĕ кăна.
Ал тупанĕ çинчен
çил вĕрет те ăна
Пирĕнтен хăварать
çĕр тусанĕ кăна.

**Паянхи**
**кун çути килес çук**
**ахрăм евĕр — ыран.**
**Паянхи**
**туйăма рифмăлаймăп**
**сăвва эп — ыран.**
**Савăн, савăк поэт,**
**ырă кур паянхи кунпала —**
**Вăхăт**
**Тур аллинче:**
**те килет, те килмест вăл — ыран.**

Эпир çак тĕнчене хитрелетмешкĕн килнĕ,
Эпир çак тĕнчене ырăлатмашкăн килнĕ,
Анчах тĕнчи кулать пиртен, кулать:
Эпир кайсан та вăл çаплах юлать.

**Пиртен килмест иккен çут уйăх туласси,**
**Пиртен килмест иккен çут уйăх чакасси –**
**Апла çак тĕнчене мĕскершĕн килнĕ эпĕр,**
**Пиртен килмест пулсан тĕнче улшăнасси.**

**Пĕр çăлтăр çутăлать – çын çуралсан,**
**Куçне хупать çын – вăл талса ансан.**
**Ман çăлтăрăм çӳл тӳперех юлинччĕ,**
**Эп Арапуç çĕрне кĕрсе выртсан.**

**Çуралнă эпĕ Арапуçĕнче,**
**Сăвви-юрри те Арапуç çинчен.**
**Апла мĕскершĕн канлĕх тупмалла ман**
**Çырма-çатраллă Шупашкар енче?..**

Вилме эп выртсассăн,
        мĕскершĕн йĕретĕр пит ĕсĕклесе?
Элле шутласа: çĕр çине
        ку ик ĕмĕрлĕх килнĕ тесе.
Тултар куркуна,
        чӳклев йĕркипе тĕппипе ĕçсе пар савăнса:
Çын вилĕмĕпе
        ун асапĕ те пĕттĕр тесе.

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

## Астивсе илмелĕх

Тин çеç-ха çурхи чечексем
чашкăрса ешеретчĕç,
Тин çеç-ха юратнă хĕрсем
юрататпăр, тетчĕç.
... Июнь шуса иртрĕ
сăрланă кусуй айĕпе,
Аюк! — çич çулхи юр сăри
сĕврелет майĕпен.

Çапла,
çуралнă кун мухтаççĕ
тем чухлех:
Епле талантлă эп! Хамран та
çӳлерех!
Çак вăхăт килетех юлашкинчен,
туссемĕр.
Çак вăхăт килетех
— эс тупăкра чухне.

**Синкерлĕ кунра**
**пĕр самант та пĕр çул пек иртет,**
**Сенкерлĕ кунра**
**пĕр çулталăк пĕр кун пек иртет.**
**Тултар алтăрна,**
**ĕçсе пар чăнăрт-чăпăрт сăпайлăн –**
**Апла та капла та –**
**мĕн тăвăпăр? – пурнăç иртет.**

Ан курнăçлан ытлашши
　　　　　　　　ĕмĕр йӳтемĕп тесе,
Чап та хисеп вилĕмрен
　　　　　　　　пурпĕр хăтарĕç тесе —
Аслă хĕвел çаврăнать те
　　　　　　　　манăç тусанĕ çĕклет,
Чаплă-и, çук-и — пурне те
　　　　　　　　нӳрĕ çĕрпе тикĕслет.

**Çисе çитсен анмасть-мĕн пĕр турам та,
Ĕçсе çитсен анмасть-мĕн пĕр тумлам та.
Пĕр кун та кирлĕ мар иккен мехел çитсен, –
Çавна эп асатте куç хупнă чух ăнлантăм.**

Элле пуянланать эп çуралсан тĕнче?
Элле çука тухать эп пулмасан тĕнче?
Çуралтăмăр пулсан, апла пурнарх-ха, тусăм,
Çуклăхпала та пурлăх хӳттинче.

Чĕре çурăлмаллах* кам хуйăх тӳссе курнă,
Чĕре çурăлмаллах** телей кам тӳссе курнă,
Тултарăр черккĕре тулли кăна –
Çурри кăна иртмен апла вăл пирĕн пурнăç.

* Чечеке лармалла
** Çурăлса каймалла

Ĕнер кăна тăван-пĕтен çӳретчĕ пасарта,
Паян вара нумайăшĕ – мĕн тăвăн? – масарта.
Хурчка мĕлкийĕ пек вĕлт шуса иртрĕ ĕмĕр:
Аса-илӳ купи анчах выртать халь масарта.

**Мĕншĕн эсĕ урăх çын пулмарăн? –**
**Тесе ыйтĕç ватлăхăм килсен.**
**Мĕншĕн эсĕ хăвăн пек юлмарăн? –**
**Тесе ыйтĕ Турă эп вилсен.**

Вăхăтпа выляççĕ тейĕн
сӳс пăявĕ туртмалла:
Вилнисем ăна туртаççĕ
кунĕн-çĕрĕн каялла,
Чĕррисем ăна туртаççĕ
кунĕн-çĕрĕн малалла.
Вырăнтах тăрать-çке Вăхăт!
Çавăн пек шутламалла.

**Пуçтарăнсан ман «Хĕрĕхмĕш куна»,**
**Тулли тултар га пĕрĕм куркуна**
**Тур кĕтесне лартах.**
**Çын салансассăн,**
**Пĕчченçĕ уйăх асăнĕ мана.**

Вунçиччĕмĕш çул.
Ав, таçта, вăтăр çиччĕмĕш çул.
Çак икĕ пăнча
çыхăнтарнă тӳп-тӳрĕ пĕр çул.
Элле эпĕ савнă та кĕтнĕ
тăван перестройка
Хыçне пытанса çывхарать
виçĕ пуç «Перес Тройка»?*

* «Халăх тăшманĕсен» шăпине татса пама, персе вĕлерме виçĕ çын кирлĕ пулнă: обкомăн 1-мĕш секретарĕ, прокурор тата НКВД начальникĕ

**Сăвă садне кĕнĕ чух**
**эпĕ пит шухă ачаччĕ,**
**Шухăш çурхи çилпеле**
**ман пуçăмра вылянатчĕ,**
**...Пат талса анчĕ улма**
**çĕр чăмăрне чĕтретсе.**
**Шухăшăм – йывăр улма.**
**Тусăм, элле кĕр çывхарчĕ?**

**Пĕр шутласан, пурнăçра темĕн те лекрĕ пире,**
**Çуклăхпала юнашар сăвăç хисепĕ пире.**
**Ĕнтĕ кусран пăхтарать чăнлăх хăватлă тӳре пек –**
**Курнăçланса пурăнма вăхăт юлмарĕ пире.**

**Сĕтелĕм майпен пушансан,**
**кĕр сывлăх пĕтсен,**
**Аманнă хуркайăк чĕппи пек**
**эп юлтăм пĕччен.**
**Спасибо*, поэзи! Мана эсĕ çеç**
**пăрахмарăн, сутмарăн –**
**Санпа калаçатăп,**
**санпа йăпанатăп – пĕччен.**

* Спасибо – спаси, бог; Турă, çăлсам.

Поэзире, паллах, ăс кирлĕ
чи малтан,
Анчах чун кирлĕ нумайрах
унтан.
Поэзине ăнланайман çын —
çын-и?
Çавна ыйтасшăн эп
влаçра ларакантан.

**Ҫурхи уҫӑ ҫил-ши чӳхет**
**ҫӳхе чӳрече чӗнтӗрне?**
**Е вӑл тунсӑхрах асилӳ**
**хумӗпе хумханать?**
**Кама кӗтмелли халӗ тин...**
**Савнин шур пушмакӗн йӗрне**
**Ҫут уйӑх анчах**
**кукленсе чуптумашкӑн анать.**

**Пыл та пит йӳçĕ иккен**
**пысăккăн, ытлăн сыпсан,**
**Турăх та пыл пек иккен**
**пĕчĕккĕн, еккĕн сыпсан.**
**И эс, мăнтарăн чăваш!**
**Пур япала виçине те**
**Перекетре эс куран,**
**перекетре пурнăç сан.**

Эсĕ, тирпейлĕх, пуян
  çын кил-çуртне мĕн таран
Уйăх пек, çутă хĕвел пек
  илемлетен катаран.
Çын умĕнче çын пекех
  эп те пурнасшăн, мăнтарăн…
Ах эс, тирпейлĕх!
  Чăвашăн чухăнлăхне пытаран.

Итлĕр мана, салтака,
тăнлăр, вылявлă яш-кĕрĕм,
Эс те итле,
сăпкаран кармашакан пĕчĕкскерĕм:
Туслăх тени вăл хитре
çар çĕнтерсе пынă чух,
Çар арканать те –
тухать сутăнчăк, йĕксĕк эшкерĕ.

**Чап та хисеп, эп сире**
**йыхăрмăп пит хистесех,**
**Кĕрĕр пӳрте паянах,**
**кĕрĕр те ларăр тесе.**
**Хăшĕ пиртен кĕлмĕçрех – эп-и, эсир-и? –**
**ыйтатăп**
**Пурпĕр хапха умĕнчен**
**ан кайăрсамăр тесе.**

**Эп – Исмаэль юнĕнчен килекен**
**тавăру йăлине тытакан,**
**Вăй çитерсе, шăл çыртса**
**тытаймарăм ун чух аллăма ятаган*.**
**Тавăртăм пурпĕр сана**
**тавăртăм, пуç касакан, –**
**Ман савăшу сăввисем**
**канăç памаççĕ сана!**

* Кĕске те кукăр кинжал.

Кирлех-ши, тăван,
палла сăвăç пулма Чăвашра?
Пулас текенсен,
«Мухтав ачисен» сăввисем йăвашрах.
Ухсай шайĕнче эс
трагеди çырма пултарсассăн,
Кам çитĕ вара
Арапуç сăвăçне Чăвашра!

Сăвăç чапне хапсăнан
çамрăк сахал-им халькаççăн!
Пурте, тĕк татнăн, васкаççĕ,
пурте «шур сăвă» çыраççĕ.
Эй, тур çырлах!
Çав çынсен пĕчĕк пепке-ачисем
Суккăр, чăлах çуралсан,
чул-чунĕсем ыратмаççĕ.

Шупашкартан инçех те мар
ман пĕчĕк çуртăм пур,
Курницаран пăхса ӳсен
шур виноградăм пур.
Çук! пушă мар ман çуртăм, эп
Карачурта пулсан та –
Унта ман сарă кайăк пек
пĕр çаврăм юррăм пур.

Сӑмаха каличчен пӗрчӗн-пӗрчӗн сӑвас,
Сӑмаха чунпала пӗр виҫеллӗ тӑвас.
Пӗр сӑмах ураран ӳкерет, вилӗмрен хӑтарать,
тет, теприйӗ.
Эс ҫакна мӗн тума уямастӑн, чӑваш?!

**Хӗвелӗмӗр! Тӗнче варри, чӗре варри,**
**Хӗвелӗмӗр,**
**Яланлӑхскер, ӗмӗрлӗхскер тесе сана**
**ӗнентӗмӗр.**
**Ҫуна-ҫунах сӳнен иккен,**
**Хӗвелӗмӗр-Анне,**
**Сӳнсе пыруҫӑн ӑшӑрах эс,**
**ҫутӑрах, Анне...**

Алран ямарăн пурнăç йĕвенне,
Ак сулăнтăн майпе çĕр çул енне.
Ах, салтăнса ӳкейнĕ сурпану пек
Чăтса ирттернĕ кунçулу, анне.

Чуна çунтарса эпĕ татăп Хĕвел умĕнчи
парăма,
Ӳте çĕр туса эпĕ татăп тăпрам умĕнчи
парăма,
Çветтуй пек ăсанăп çак çут тĕнчерен эп,
анчах та
Нихçан та татаймăп, нихçан та Анне умĕнчи
парăма.

Мĕн хушса калам çĕнни
мухтаса сана, Анне,
Халиччен пĕр сăвăç та
каласа паманнине?
Пирĕн çылăхăмăра
каçарма пултарнăран
Эс, Аннеçĕм, тĕнчере
Турăпа пĕртан тăран.

Хăш чух Аннем тĕлĕкĕме килет,
Иртни çине куç ывăтса илет:
«Пурнан иккен-ха, ывăлăм, пĕрмайлă,
Ман çулсене çитме ман пилĕм»,- тет.

**Хăш чух аннем тĕлĕкĕме килет,**
**Иртни çине куç ывăтса илет:**
**Элле пĕр пăрнăçра пĕр йăнăш турăм?**
**«Сана эп ятламашкăн килтĕм», – тет.**

**Хăш чух аннем тĕлĕкĕме килет,**
**Малашлăха куç ывăтса илет:**
**«Куç хупанкисене çĕкле-ха, чĕппĕм,**
**Сан хуйăхна хама эп илĕп», – тет.**

Чечексем чечен, теетпĕр,
çак сăмах вăл – тĕрĕсех.
Хĕр юрри пек юратуллă,
савăк кусла – тĕрĕсех.
Чечекрен те чеченрех-мĕн
çĕр çинче этем тенийĕ:
Сив куçпа пăхса илсен те
аманать вăл – тĕрĕсех.

Этемрен хăруш чĕрчун вăл
                    çук та пулĕ çĕр çинче,
Курайманлăх, кĕвĕçӳлĕх
                    унăн çăткăн куçĕнче.
Пурăнма çуралнă халăх
                    хăвăртрах вилмеваскать-шим? –
Хăй историне çапла вăл
                    вĕçлĕ вăрçă хирĕнче.

Ӗлӗкрен пырать сӑмахӗ —
пасарта пур ик ухмах:
Сутаканӗ те ухмах тет,
илекенӗ те ухмах.
Вӗсенчен те ухмаххийӗ,
тен, пӑхса ҫӳрекеннийӗ?..
Хамӑн пурнӑҫа илес-тӗк,
тӗрӗсрех те ҫак сӑмах.

**Ай, ăçтан хăват çитертĕм**
**ун чухне эп ун чухлех!**
**Парăнмарăм çеç-и, тусăм, –**
**эп çĕнтертĕм ун чухне!**
**Халĕ те эп пăхăнмастăп,**
**хăрамастăп, пĕлĕрсем,**
**Ма тесессĕн, вилĕм йӳнĕ япала вăл, –**
**пĕлĕрсем.**

Çука юлатчĕ-им эп пулмасан тĕнче?
Пуян пулатчĕ-им эп пурăнсан тĕнче?
Çуралтăмăр пулсан апла пурнар-ха, тусăм,
Çуклăхпала та пурлăх хўттинче.

Йывăç ӳсет ăшă çумăр çусан –
ăнсăртран,
Йывăç ӳкет урнă тăвăл тухсан –
ăнсăртран,
Мӗншӗн питех хурланас куçăм тăрук
хупăнсассăн, –
Пурнăç та килнă çак çут тăнчене –
ăнсăртран.

Çӳл вĕренен те хăçан та пулсан –
ӳкмелле,
Çут çăлтăрсен те хăçан та пулсан –
ӳкмелле.
Кам мухтавра сăрт çинчи пек юласшăн –
астăвăр:
Сăрт та хăçан та пулсассăн шуса –
ӳкмелле.

Эп пурăннă чух маншăн вилĕм пулмасть –
пăх та кур,
Вилсессĕн вара эп туймастăп ăна –
пăх та кур.
Апла вилĕмпе тĕл пулмастпăр эпир
нихăçан та?
Тавах лăплантарнăшăн ман чунăма,
Эпикур*.

* Эпикур – ĕлĕкхи грек ăсчахĕ

Эй тĕлĕк темерĕн:
умри утма çулăм – шур пурçăн хăю,
Утатăп, утса тухаймастăп, –
ăçта Исмаэль савнă Мекка?
Çул урлă хура эрешмен
майĕпен каçса кайрĕ…Аюк!
Кала-ха, тархасшăн, тухатмăш,
элле вилĕме ку?

Пӗр шухӑш талать те –
тӑрук такӑнатӑн,
Чуна ҫунтаратӑн
пӗлесшӗн ӑна та, кӑна та.
Нумай пӗлнинче те,
тӑванӑмҫӑм, ырлӑхӗ ҫук:
Кашни япалан вилӗмне
эп курса хурланатӑп.

# «ÇĂЛРИ ÇĂЛТĂРСЕМ» ÇАВРĂМРАН

**Ĕненĕр çутçанталăк саккунне:**
**Хĕл вĕçленмесĕр пулмĕ çуркунне.**
**Йӳççи ĕçсен те тутлăн калаçмашкăн**
**Кĕтсе илетпĕрех уяв кунне.**

Ĕнтĕ тăр шыв юхать, сив чул юлать...
Куç курнине те каласан юрать...
Уçланкăна чупса тухать те сăввăм
Каллех чун чăтлăхне кĕрсе юрлать.

**Эп çынлăх пур-ха теттĕм çынсенче,**
**Çапла çырман-и Тур Кĕнекинче!**
**Такăнсанах — мана тапса ӳкерчĕç,**
**Ӳксен — ташларĕç кăкăрăм çинче.**

Çынна çултан мĕскер аташтарать?
Кӳлешӳрен, ав, килĕшӳ тарать.
Телей этемсене кĕвĕçтерет те
Инкек вара ... каллех танлаштарать.

Ĕнтĕ хĕвел тухать, хĕвел анать,
Пăхса тăрсассăн, пуçăм çаврăнать.
Ай-хай, пĕр кун каять, тепри килет,
Ĕмĕрĕмеката-ката илет.

**Çак çутçанталăк ырлăхне – пехил,
Вылявлă чĕрĕ пурнăçа – пехил.
Пĕр иртнĕ çул çине тек таврăнаймăн –
Памаллине парсан, илмеллине те ил.**

Епле вĕçетчĕ кайăк савăнса!
Персе антарчĕç — ӳкрĕ хутланса.
Шур юр пек шур пӳспе ăна чĕркерĕм,
Хура çĕрпе хупларăм хурланса.

**Суранлă чунăмра чуралăх çук,
Мăнкăмăллă – анчах хӗвре чул çук.
Килӗштерсен, каçарăп тăшмана та,
Сутăнчăка вара каçарас çук.**

Чыслах пурнас тесен – кĕрешмелле,
Кирлех пулсан, мăнаçлăн вилмелле.
Эсир мĕн-ма çапăçуран таратăр? –
Ик пурнăç пурăнасшăн-им, элле?

«Телей вăл – телее кĕтни кăна», –
Тесе каларĕ пĕр ăсчах мана.
Мехелĕм çитесси нумай юлмарĕ –
Телейлĕ пултăм-ши кĕтсе кăна...

**Элле эп, тин çуралнӑ ачалла,**
**Куратӑп тӗнчене йӑлт кутӑнла?***
**Çук, çук! – ача вӑхӑтӗнчен эп иртнӗ, –**
**Тӗнчи, тен, хӑй йӑваннӑ кутӑнла.**

* Ача, çуралсанах, япаласене кутӑнла курать.

Пурнăçăмра чăтма çук йывăр чух,
Танта-тапта мана пытарнă чух
Эп турăш умĕнче чĕркуçленмерĕм –
Çулпуç умне пырса ӳкессĕм çук.

Çынран эп çех-ши катăк, тупата,
Ман çех-ши ăраскалăм катăк, татăк? –
Пĕр хаклăш япала тупатăп та
Ик хаклăш япала эп çухататăп.

Эп айӑпа кӗрсен, ҫынсем мана
Хушса, катса тӳрре кӑларӗҫ, сутӗҫ.
Ҫапла ҫав, хӑй йывӑрӑшне манать
Писмен тытса тӑран йӳтенӗ сутӑҫ.

**Чĕнмен-çке çут тĕнче мана ĕçке,**
**Ĕçсен те мухмарĕ ун йывăр-çке.**
**Апла та çăмăл мар, капла та пурнăç,**
**Анчах вăл, пирĕн телее, кĕске.**

Шухăш пулать теççӗ ăшă çил,
Курăк пулать теççӗ вилнӗ çын.
Асаннесемӗр мар-и – курăр-ха
Хӗвел патне кармашнă курăка.

Ан тив, мана кураймансем туллаччăр,
Ят-шывăма пĕтерччĕр таптаса.
Чĕркĕмĕл пек таса эп – сирĕн ачăр,
Ĕмĕтĕмсем те манăн тап-таса.

Синкерлĕхе ăнланăр самаях
Ăна чунпа чăтса курсассăн хăвăр.
Ай-хай хуйхи пырать-çке нумая,
Савăнăçсем анчах иртеççĕ хăвăрт.

**Тав куркийĕ хыççăн çул курки, –
Этем пурăнăçĕн çав йĕрки.
Тав куркине тулли тултартăм,
Çул куркине çурри хăвартăм.**

Çĕр гуртрĕ – йывăрлатрĕ уттăма,
Лав тулчĕ – хистеместĕп утăма.
Анчах кунсем мĕн-ма кусаççĕ хăвăрт? –
Мана прахсан çăмăлланать-шим вăхăт.

**Тăванăмсем, хитре тăванăмсем,**
**Эп ӳкнипе пӗтмеççӗ-çке çулсем...–**
**Тăварăннă лаша пек чупӗç-кайӗç**
**Эп пурăнса пӗтереймен çулсем.**

**Çавăрăнса саланчĕ çăварни,**
**Юррипеле ăсанчĕ мĕн пӳрни.**
**Ак çимĕк те çимĕçĕпе çитейрĕ,**
**Анчах ăçта, ăçта уяв парни?**

Çурма çула çитсе çул татрăм,
Çур тĕнчене умран çухатрăм.
Элле çапла çулран çул катăп,
Çут тĕнчене йăлтах çухатăп…

Ĕмĕрне те такăнмăп тенĕччĕ,
Ĕмĕрне те ватăлмăп тенĕччĕ.
Пăрнăç пулчĕ çулĕ – такăнтăм,
Пурнăç йывăр килчĕ – ватăлтăм.

**Хӗвеллӗ кун мӗлкем ҫӳрет пӗрлех,**
**Ӑҫта кайса кӗрет вӑл сӗм ҫӗрле?**
**Хисепӗм тепӗр хут хӗвелленсе тухсассӑн,**
**Туссем каллех килеҫҫӗ-шим элле…**

**Тĕнче тытакансем, çĕр тĕкмисем,**
**Миçе вăл сирĕн тĕрĕслĕх, миçе?!**
**Те пур, те çук çав турă.. пурпĕр, пурпĕр**
**Вăл çех пĕртен пĕр Тĕрĕслĕх, Виçе.**

Танлантару та шырамастăп урăх –
Пулни-иртни – çулса пăрахнă улăх.
Анчах малӗмӗт – кайранхи каю –
Чуна гирсе çӗкленчӗ симӗс курăк.

Чулран касса кăларнă Нефертити,
Ытарлă та çемçе куллу унччен
Этем чунне çеçке пек илĕртетчĕ, –
Халь ак кулан тĕнче ухмаххинчен.

**Хуçасем çапăçаççĕ. Ан кай**
**Çав вăрçа эсĕ урăх.**
**Айăрсем тапăçаççĕ. Ай-хай**
**Таптанать ешĕл курăк.**

**Вӗҫленчӗ пуҫланӑ ӗҫӳ,**
**Поэма тӑп-тӑп виҫере.**
**...Телей хыҫӗпе кӗвӗҫӳ**
**Мӗлке пек ҫӳрет.**

**Тĕнчере пĕртен пĕр танлăх – вилĕм**
**Манпа тан тăвать пурне те ӳлĕм.**
**Савăнас-и çакăншăн? Анчах**
**Ма танлашмалла манпа ачан...**

Тем пысăкăш ыйту палли – тĕнче,
Шикленчĕк тĕлĕнӳ – ун кусĕнче.
Пăнчийĕ, тумламран та пĕчĕк атом,
Талса ансан, пĕтет вара тĕнче.

**Икке пайлать пурне те шухăш ман:**
**Ами пулсассăн, пулмаллах ун арĕ.**
**Туссем пур чух тупăнатех тăшман,**
**Тăшман пулсан… тус пулмасса пултарĕ.**

Пӗр пус укҫам та ҫук – текех ан мухтăр,
Влаҫа ларассăм ҫук – ан йăпăлтатăр.
Тӗрӗссипе каларăм та ҫакна,
Туссем те ал памаҫҫӗ халь мана.

**Çынна эс ыр тумашкăн ан васка,**
**Усал тума кăна ан тăрăш, теççĕ.**
**Хăшсем, чăнах та, çак выртан каскан,**
**Усал тумаççе, ырă та кӳмеççĕ.**

**Мĕн çăмăл тĕнчере, мĕскер ансат? –**
**Явап парать пурне те пурнăç хăй вăл:**
**Çын йăнăшне асăрхама ансат,**
**Çынна канаш пама питех те çăмăл.**

**Епле çиет ахах пĕрчи куçа! –**
**Пулсан та хăй йĕп куç пек пĕчĕкçеççĕ.**
**Çул шучĕпе хаклан-и пурнăçа? –**
**Ăна мĕнле пурăннипе виçеççĕ.**

Микротĕнче йĕрки-шим чун-чĕремĕн? –
Саккунĕсем ун урăхла пачах:
Телейĕме çынпа пайланăçемĕн
Пĕчĕкленмест вăл – ӳсĕнет анчах.

Пĕлетпĕр: пурте, пурте çул çинче.
Шлагбаум антарман-ха, пырăр, иртĕр.
Вокзал пек туйăнать çак çут тĕнче:
Кĕретпĕр те тухатпăр çеç ун витĕр.

**Çын лайăха кăна пăхать пĕрмай,**
**Начаррине йышăнтараймăн, кăлăх.**
**Ав, çĕнгерӳн те ашшĕсем нумай,**
**Çухатусем вара – ялан хăр-тăлăх.**

**Хăв ĕçлесе илмен япалана
Каппайланни, тен, иртекен ухмахлăх.
Анчах тур панă сăн-сăпатупа
Вĕçкĕнленни – тур каçарми ухмахлăх.**

Ырсем виç пуçлă усала çĕнсен,
Тĕнче таса пулать тесе калаççĕ.
Мĕскершĕн ир каяççĕ ыр çынсем?
Усаллисем усал тума юлаççĕ.

**Кирлех те мар пек япала пур чух –
Ăна тытатпăр хывăх пек тăкаклă.
Çука, ав, чĕпĕтсе илме те çук,
Сахал чухне вăл япала пит хаклă.**

Хăй тĕллĕн çитĕнет усал-тĕсел.
Ырра ача пек çĕклесе çӳретпĕр,
Аван та сыввăн ӳстĕр-ха тесе
Ал-урине те çирĕп пиелетпĕр.

Епле ан пултăр чунлăх чунсенче?!
Епле ан пултăр çынлăх çынсенче?!
Эп çаксене текех ĕненмесессĕн,
Ман пурăнни те уссăр çĕр çинче.

Хĕрхӳ асаилӳ пек, яланах
Пит усăллă тееççĕ палана.
Те пур, те çук ун сиплĕхĕ? – пĕлместĕп,
Анчах ялан çиес килмест ăна.

Хур тĕкĕпе çырсан та, курăр-ха,
Сахал-и куртăм, чăтрăм хурлăха.
Чакак тĕкĕпеле çырам-и халĕ? –
Чун систĕр çывхаран хăрушлăха.

Кăнтăрлахи хĕвел ăшшипелен
Шур чул çине канас тесе килен.
Тăрук ун айĕнчен хура хăю пек
Явкаланса тухать хура çĕлен…

**Мĕн каласа парсассăн та пĕрех**
**Кĕртеймĕн ÿкĕте, ÿкĕтлекенĕм:**
**Тĕнче варрийĕ маншăн çак Çĕрех,**
**Çĕр кăвапийĕ маншăн – тăван енĕм.**

Ăçта вăл тĕрĕслĕх, хăш çĕрсенче?
Ăна явап параймĕ çулçӳрен те.
Е вăл пурăнăçри ырлăхсенчен
Хăвна тивĕçлине кăна илни, тен...

**Тӑванӑмсем, пулар-и пӗр кавар, –**
**Этемлӗхе тасатмалли тӑвар:**
**Ыр ҫынпала пулар ҫич хут та ырӑ,**
**Усал ҫынпа – ҫич хут усал пулар.**

Ура çине хура ĕне пуссан,
Мĕн чухлĕ шухăш тухрĕ капланса!
Эп вĕсене тăватйĕркен хупатăп –
Кĕтӳ пек ан каяйччăр саланса.

Сăввусем салху тесе калатăн.
Пурте, пурте пурнăçне кура.
Уярта çап-çут вăл, анлă Атăл,
Пĕлĕтсем тухсассăн – сĕм-хура.

**Мĕнле пĕлмен эп халиччен, ухмах,**
**Çăлтăрсене çăла пырса пăхма?**
**Вĕсем унта кăнтăрлана анаç-мĕн**
**Хура каçра каллех çиçсе тухма.**

# ТӐВАТКӐЛ ТӖНЧЕ

**Пире, чăваша, сыхласа усрама**
**килнĕ Пӳлĕх,**
**Кала-ха, мĕскершĕн халькаççăн хухать**
**килĕшӳлĕх?**
**Чăвашăн тĕнчи çавра мар-çке, тăванăм, —**
**тăваткăл*,**
**Тăвата енчен тĕрĕнсе тĕп-тĕреклĕ**
**тăрать вăл.**

* Тăваткăл конфигураци пĕлтерĕшĕ: тĕплĕх, шанчăклăх, тăнăçлăх, килĕшӳлĕх.

Ыр ту та çынна, ун çинчен манса кай эс,
ыр çын,
Пăрах шанчăкна Атăла, нимех те ан кĕт эс,
ыр çын.
Ытарлă ыран-и е тепĕр вун çичĕ çултан-и, —
Пĕрех сан патна таврăнать вăл — ĕнен эс,
ыр çын.

Кăвак çилхеллĕ шур çиле
хупăрласа эп тытрăм,
Ăçтан килетĕн васкаса,
тесе унран эп ыйтрăм.
Тухатлă Тухăçран тухса
кунта васкарăм, терĕ,
Чăвашăн маннă тахатне
эп илсе килтĕм, терĕ.

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

## Астивсе илмелĕх

Кăвак çилхеллĕ шур çиле
хупăрласа эп тытрăм.
Ăçта каятăн васкаса,
тесе унран эп ыйтрăм.
Асамлă анăça
кайса çавăрăнам-ха, терĕ,
Сан юрруна пĕр-ик çавра
илсе каям-ха, терĕ.

**Эп — уçă алăклă çурт.**
**Вĕр, саманташ-самана!**
**Санăн вĕрў сывлăшу**
**хĕрттĕр, тасаттăр мана.**
**Вĕр, çавăрттар, ахăрттар,**
**çăлтăр тусанĕ кăлар —**
**Сăвăç чунне çеç манран**
**нăчăртаса ан кăлар...**

**Ĕлĕк поэт патшапа**
**ларнă пулсан юнашар,**
**Чыс-хисепе пайласа**
**илнĕ пулсан çурмашар,**
**Халĕ вара влаçсене**
**ăслă поэт кирлĕ мар...**
**О Навои, Навои!**
**Çăлтăр та халь çăлтăр мар.**

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

## Астивсе илмелĕх

Ассăр ачалăх пуçтарнă
 икĕ кĕсье шур тетте,
Çамрăклăх çаврăнă тытнă
 шур çилхерен ĕмĕте.
Ăсăм та пулнă ăсмалăх,
 сывлăх та пулнă сыпмалăх, —
Эп, Николай Исмуков,
 чухăн пулман ĕмĕрте!!!

**Хитре пурнас тесен — итле эс Хайяма,**
**Реххет курас тесен — итле эс Хайяма.**
**Анчах мӗскершӗн тунсӑх-ҫех юлать пек**
**Йӑлт вуласа тухсассӑн Хайяма?..**

**Палламан çынпа нихçан та**
**ан калаç эс ӳсĕрпе,**
**Çывăх тенĕ çыннупа та**
**ан калаç эс ӳсĕрпе.**
**Эс пĕлместĕн-им, тăванăм,**
**виçерен иртсе сыпсассăн,**
**Хăйĕн сиплĕ хăватне те**
**çухатать иккен шерпет.**

**Шăхлич çине кăвак шăрçа**
**хурса юрлать пĕр кайăк:**
**Юмах хăрушă та, пĕрех,**
**пĕрех ун вĕçĕ лайăх.**
**Анчах та пурнăç урăхла —**
**ун вĕçĕ пит хăрушă!**
**Шăхлич çине хура шăрçа**
**хурса юрлать пĕр кайăк...**

Эп сар хĕвелччĕ ун чухне,
эп ун чухне чĕкеçчĕ,
Кайран, мана каç хупласан,
эп сăнсăр уйăх çеçчĕ.
Пĕрер çынран, икшер çынран
пуçтарнă аслă халăх,
Хăçан эс тĕрĕс пулнă-ши?..
Ман çавна çеç пĕлесчĕ.

Чăлт шурă, шурă тутăрпа
шур кĕмĕлне тасатрăм,
Çут уйăх ванчăкĕ пекех
ялтăриччен çутатрăм.
Халь акă – аллăм ман хура,
шап-шурă тутăр тĕксĕм…
Эп сан хутна кĕрсе, савни,
ят-шывăма çухатрăм.

Телей те инкек хушшинче
эс мĕн чухлĕ ан пурăн,
Пĕлсе пĕтереймĕн пĕрех
савнăçпа хĕн-хура.
Ав, çĕмĕрт çеçки те,
шуратнă пир тейĕн, шап-шурă,
Анчах çырлисем,
çырлисем мĕншĕн йĕпкĕн хура?

Сурăх çухалчĕ пулсан –
хуйăх пусать хресчене,
Тупрĕ пулсассăн ăна –
савăнăç мĕн ирчченех!
Мĕн ку? – пуçа çаварса
йăпатакан кĕрчеме?
…Ĕнтĕ пурнатпăр çапла,
çутă куна хурататпăр.

Кам чухламасть ӑна! –
Арҫын вӑл яланах
Этемлӗх шутӗнче
пӗр карт аяларах.
Хӗрарӑм – идеал,
анчах та ӳсӗрле вӑл –
Каҫарӑр –
выльӑхран чылай аяларах.

**Çут çăлтăрсен ушкăнне çил хăвалать,**
**аркатать,**
**Çӳллĕ агат тусене çил хавшатать,**
**аркатать.**
**Пур çилсенчен вăйлăрах,**
**хăрушăрах çын сăмахĕ! –**
**Аркатайми туслăха вăл пурпĕрех**
**аркатать.**

**Хавшанă Пăла хум ухать**
**юлашки вăйĕпе хаш та хаш.**
**Хухатăн-им эс те,**
**тахçан тахатарлă ĕрченĕ чăваш?**
**Тĕнче юхăмне хирĕçле**
**эс ишейĕн-и? – илтĕнчĕ сас –**
**Таçти ĕмĕртен**
**кимĕ евĕр кăкарăннă кĕлĕ…**

Пĕр тĕлĕке икĕ хут,
          виçĕ хут курма пулĕ, — эккей.
Пĕр йăнăша икĕ хут,
          виçĕ хут тума пулĕ, — эккей.
Пĕр пурнăçа пурăнса пĕтерсен
          тепĕр хут пурăнаймăн.
Çак чăнлăха пăхăнса
          халсăр кнеç пек тăратăп, — эй-эй…

**Шăпчăк юрри чунăма сарă пикен ыталарĕ –**
**экк‌ей!**
**Шанчăк, чикан майрилле, куçкĕретех улталарĕ –**
**эккей!**
**Тен, шанчăкран кирлĕрех çавă чеелĕх тенийĕ? –**
**эккей!**
**Ĕнтĕ çынсем пек чее эп пурăна пĕлеймерĕм –**
**эй-эй…**

**Таса хирсенче пирĕшти пек таса хĕр ĕçленĕ**
**– эккей!**
**Ā̆на уйăх савнă, хĕвел çылăхран çăлса пыпă**
**– эккей!**
**Чăвашăн çăршывĕ шап-шур турăсен çĕрĕ пулнă**
**– эккей!**
**Мĕн тăвăн, - ăна халь усал-тĕселсем тĕселенĕ**
**– эй-эй…**

**Пăлхар ялавне кĕмĕл кӳлĕ чӳхенĕ**
**– эккей!**
**Пăлхар ялавне пур тавралăх чӳк тунă**
**– эккей!**
**Ăна сар хĕвел те çут уйăх чуптунă**
**– эккей!**
**Ăçта халь чăвашăн пĕветнĕ пĕтевĕ?!**
**– эй-эй…**

**И тăвансем, тăвансем,**
**эпĕ сире, тăвансемĕр,**
**Пĕр йĕркере виç хутчен асăнтăм —**
**ан тĕлĕнсемĕр,**
**Тав чăваша! – Диоген**
**шухăшласа çитеймен**
**Чыс пъедесталĕ çиичче –**
**пирĕн ырми Аннесемĕр.**

Сĕм ĕмĕрсен шавĕнче
чăн чăвашла сас шыратăп,
Пĕрчĕн сăмах пуçтарса
пĕрлĕхлĕ сăвă çыратăп.
Эп, несĕлсен çарĕнчен
кăшт кая юлнă салтак,
Калăр-ха, камшăн паян
çак трофея пуçтаратăп?..

Тĕрĕслĕх халь çынсенче –
хаклă ахах шутĕнче,
Пĕрчĕн сутаççĕ ăна
аслă тӳре сутĕнче.
Тӳрĕ сăмахшăн парне
вăрттăн ыйтаççĕ пулсассăн,
Хăй яланхи чиккинчен
куçнă иккен çут тĕнче.

Эп ăсчахсен çăршывне кайса куртăм –
рехмет!
Ăслă çынсен сăмахне пĕрчĕн-пĕрчĕн суйларăм –
рехмет!
Çутă тĕнче пĕр иккен, – терĕм те
кăшт иккĕлентĕм:
Эпĕ ухмах-и, вĕсем-и? – çук пĕлеймерĕм –
рехмет!

Мĕн вăл эпир пурăнни –
лăпкăн вилме вĕренни,
Çутă тĕнче саккунне
чыслăн чăтса çӳрени.
Еккĕмĕр хыççăн кайса
йăнăш туни те пулать пуль…
Мĕн вăл эпир пурăнни –
çылăх пухса çӳрени.

Пирĕн ăшра, ӳт-пӳре,
турăçăм, шыв та тăпра –
Сĕм ĕмĕрхи тĕнчере
ĕмĕрлĕх йӳнĕ тупра.
Шухăшлă материалист,
çак тĕрĕсе ĕненсен те,
Мĕншĕн пурнан пурнăça
хаклă мерчен пек упран?..

Пурнăç – хĕрарăм иккен.
Пурнăç хĕрарăм кăна.
Ĕмĕрĕм иртрĕ, пĕрех
ăнланаймарăм ăна:
Çăлтăр-кунсем çулсерен
йăвашланса пынăçемĕн
Мĕншĕн тата ытларах
эп юрататăп ăна?..

Тӑхӑмсенче уссӑрах
эпӗр шыратпӑр тӗрек –
Вӑхӑт ҫитсен, ҫилсӗрех
пурте тӳнетпӗр пӗрех.
Эй эс, чарса чарӑнми
куҫӑмӑн шелсӗр саккунӗ!
Сан еккӳне пӑхӑнса
йӑптӑх тӑкать, ав, тирек.

Улăх кăкриййĕ çинче
пĕр хурчăка явăнать,
Çăткăн астăвăм çапла
пурнăç тавра явăнать.
Эй, асăрхан, кӳренӳ –
чунăн аманнă чĕппийĕ,
Вăл хурчăка пек сана
чĕррĕн тытмашкăн анать.

**Мĕншĕн ытла пысăк уйăх**
**пĕчĕк çурта çумĕнче?**
**Мĕншĕн ытла пĕчĕк хуйăх**
**пысăк поэт чунĕнче?**
**Ак çаплалла çĕтĕлет**
**кĕвĕç этемĕн сăхманĕ,**
**Уншăн кану кунĕсем те**
**çук, ахăртнех, çĕр çинче.**

Чунăм – тĕнче хĕрринчи
пĕчĕк, таса кӳлемек,
Туйăм унта чӳхенет
шур çăкаран кимĕ пек.
Шăплăх – саркайăк йăви вăл,
юрă çуралчĕ – ал çупăр!
Тинĕс чĕвен çĕкленсе
илтĕрччĕ ун хумĕпе.

**Вăй çитерсе сулăмпа çапаймасан –**
**чул калмасть,**
**Хăв айăпна юлташна каламасан –**
**чун канмасть.**
**Ман сăввăма савакан савăш чăвашăм,**
**асту эс:**
**Калаканнийĕ манать те,**
**итлекеннийĕ манмасть.**

**Кам пултарайĕ пӳлме**
**аслă хĕвел çаврăмне!**
**Çылăх, çырла пек пухсах,**
**тулĕ поэт кăмăлне.**
**Вилĕм тарне арăму**
**типĕтнĕ хыççăн, сасартăк**
**Тытĕç те анĕç сана**
**Иосафат айлăмне.**

Эсӗ пӗлмен-им, Сократ,
шухăш хуçи, ун чухне
Ма çулсерен тунине
аслă люстраци чӳкне?
И çаврăнан самана...
Ăслă пулмашкăн юрать-и,
Пӗтӗм тӗнче
ухмахпа тулнă пулсан кучухне!

Шурă чулран пӳ-сине
чун вĕрсе кĕртнĕ шур Анна [*] –
Шур тĕтрери Петергофшăн
вĕçсĕр хӳхлен Ярославна,
Мĕншĕн поэзи тени
чĕр тунсăхра нумайрах?
Мĕншĕн вара асилӳ
чăн пурнăçран лайăхрах?

[*] Анна Ахматова

Тен, ĕмĕлке хыçĕпе çутă çӳрет? –
кам пĕлет…
Леш тĕнчере чап тени кирлĕ-ши вăл? –
кам пĕлет…
Эс Елисей хирĕнчен тĕттĕм çĕре
тухрăн мар-и,
Иртнĕ асапшăн пайтах
чап хушса панă поэт*.

* Митта Ваçлейĕ

Тӳнчĕç хитре палăксем,
сӳнчĕ суя ĕненӳ,
Чак тăрăнать чĕрене
сăнă чавки – кӳренӳ.
Халь çĕнетӳ çăварне,
кобра куç пăвнăи, кĕретпĕр,
Халăх ухмах иккенне
халăхпала тан пĕлетпĕр.

Сар ылтăн çĕррĕме çухатрăм та –
çур кун шырарăм.
Пĕр çаврăм сăввăма çухатрăм та –
çич кун шырарăм.
Кала, юлташ, апла эп – кнеç е кĕлмĕç?
Эп хам камне пĕлсен те –
пулăп пĕлмĕш.

Эп телейлӗ чухне
пӗр ҫавра тӗкӗр пекчӗ тӗнче,
Пӗр тумлам куҫҫуль витӗр пӑхсан —
иккӗленчӗ тӗнче.
О епле хӑрушла
икӗ питлӗ иккен пирӗн халӑх:
Пӗр енче сар хӗвел,
вил ҫӗленӗ пуль тепӗр енче.

Уйăх та мар эп, тăван,
кĕр касĕнче çуталан
Çăлтăр та мар, –
пурĕ те хама евĕр талант.
Пушă хирти арăслан пек
мĕншĕн пĕччен эн ялан?...
Кусрĕ те кайрĕ
шур хут çийĕпеле йӳç палан.

Хĕр-патша Семирамида
чечексем юратнă, тет,
Вĕсемпе вăл ир те, каç та
калаçса киленнĕ, тет.
Эс пĕлетĕн, пирĕштийĕм,
хитре мар чечек пулмасть вăл –
Пĕчĕкех пахча илемĕ
сан сăнна илемлетет.

**Эс айăплă, теес, эрех-сăра ĕçнишĕн,**
**Эс çылăхлă теес, хĕрсем çине пăхнишĕн.**
**Философ пуçăмпа çавна çех ăнланмастăп:**
**Эп айăплă-им-ха Турри çапла çырнишĕн?**

**Юр чӳхенет çӳхен —**
**шур хĕл киленчĕкĕ —**
**Качча каяс пикен**
**шап-шур пĕркенчĕкĕ.**
**Кăмакара — кăвар,**
**сĕтел çинче — черкке, —**
**Çак çутă тунсăха**
**ĕçер-и, чиперккем.**

Сăрлан çырли эрехĕ
кăпшăмра,
Çинçе пилĕклĕскер
çеçке умра.
Çумра савса савниййĕм лармасассăн,
Вут чулĕ çитеймест пек
сăввăмра.

**Чунран савман савни, ай, савни мар,**
**Чунран çырман сăвви, ай, сăвă мар.**
**Çак кĕсĕк пурнăçа чунтан-вартан эп саврăм —**
**Пурнатăп-ха тесе ма калас мар...**

Тата мĕнле рай кирлĕ урăхран? —
Умрах Хырай. Чечеклĕ улăхран
Тур шыв юхать. Çерем çинче савниçĕм...
Тата мĕнле рай кирлĕ урăхран?

**Çыратăп сăвă —**
**кам вулать ăна?**
**Пĕр-пĕр Блок чунлă**
**шкул ачи кăна.**
**Карма çăварлă чунсăр телевизор**
**Яланлăх килчĕ, ахăр,**
**хăнана.**

Аçам çине хурам аçа чула —
Асилӳпе таткалам мар чуна.
Ёмĕтĕме-çунатăма сарам та
Ыталаса илем килес куна.

**Пире тĕнчене кăларан Андриан,**
**Эс пиçĕ тееттĕм кĕрхи хăваран.**
**Сăпайлă, тĕреклĕ чăваш эталонĕ,**
**Мĕн-ма Чăваша тăлăха хăваран?**

**Кăпчак инçетлĕхĕ, чăваш виçелĕхĕ,
Анат енри пĕр сăрт — Улăп пуçелĕкĕ.
Тăхăмсене кун-çул парса тăран тахат —
Кăпчак инçетлĕхĕ, чăваш виçелĕхĕ.**

Шăрăх тăрать-и, е талăк та талăк
Çумăр çăвать-и хăш чух,
Пурпĕр хитре çакă çутă çанталăк
Сывлăх та кĕрлĕх пур чух.

Тĕл-тĕл яр çиçĕм çиçнĕн каçхине
Суран çине суран чĕрем çинче.
Епле пурнатăп-ха?.. Тен, вĕсене
Тĕл-тĕл телей сиплет пуль çийĕнчех.

Ик ҫутӑ ҫӑлтӑр евӗр куҫусем,
Ик ҫутӑ уйӑх евӗр питӳсем.
Васка, чипер пикеҫӗм, пурӑнмашкӑн —
Вӑхӑтлӑха кӑна ҫав теттесем.

Паян кăштах эп хĕрĕнкĕ пулас,
Апла кăштах телейлĕ те пулас...
Епле вут-çулăм пек кăтрусене ман
Куçа хупса рифмăласа хурас...

**Ыйткалакан çынна камах итлетĕр? —**
**Хисепсĕр çын иккен вăл кĕлĕре те.**
**Анчах вăрçмашкăн тăхтăр пуяна та:**
**Тупра пухма çынна ăс-пуç кирлех-тĕр.**

Кăштах чун пур пек чĕрĕ кĕмĕлте*,
Çак вĕренен те чунĕ пулĕ, тен...
Ăçтан ун чухлĕ пухнă эс усаллăх? —
Чун вырăнне те чул сан чĕрӳнте!

* Чĕрĕ кĕмĕл — ртуть.

**Изидăн пĕркенчĕкĕ уçлăх таран,**
**Сиретпĕр сĕвемĕн-сĕвемĕн.**
**Ăçти сĕвĕмре сиксе тухĕ тиран,**
**Ырсем ăçтан тухĕ — сисеймĕн.**

Халь-халь вĕçсе анас пек çулçисем,
Халь-халь талса анас пек улмисем.
Çапла вăл кĕр çитсессĕн, хал пĕтсессĕн —
Вĕçевлĕ — сисĕм, йывăр — утăмсем.

Кунĕпе юхсан та иксĕлмест Пăла.
Пăлапа пĕр тан эп терĕм пулмалла.
Иксĕлсех пырать мĕн сывлăх — ма тесессĕн,
Вак укçа пек тытрăм, ахăр, кăмăла.

Йӗп чиксен те куҫ курмийӗ пуличчен,
Чул хурсан та чун туймийӗ пуличчен, —
Тăвăл тухтăр, ҫумăр ҫутăр, хум алхастăр,
Нимӗнле те мар ҫанталăк пуличчен.

Йĕп тирме те куçăм çивĕччĕ,
Савни тени ялта çиччĕччĕ.
Куç шăрçине ларчĕ шар тăвар,
Чун-чĕрере сӳнчĕ шĕл кăвар.

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

## Астивсе илмелёх

**Лайăх асаилӳ сăра пек**
**Сыпса парсан самай ӳсĕртет.**
**Йĕрĕ кайăк вара ерипе**
**Кăштах канса ил-ха Исмук*, тет.**

* Исмук — араб чĕлхинче *исма* (                ) перси чĕлхинче *Исмаэл*. Библине вăл исламран килнĕ. Кĕскетсе, ачашласа — *ук*, тĕне кĕнĕ хыççăн вырăсла — *ов* хутшăннă, вара *Ismukov* пулса кайнă. Berna Schemer. Wesbaden. – 1977. –s. 153.

Кун-çул вĕçне тухнă çулçўрен –
Каска çинче ларап каçсерен.
Тăна илейместĕп халĕ те:
Кам çаратнă мана, хăш тĕлте? ...

Çумри юлташăмсем лайăх ман:
Лайăх асаилӳ, кив сăхман.
Пĕри – чун-чĕрене йăпатать,
Тепри – ват шăм-шака ăшăтать.

**Шапа хуранне пĕрчĕк хăйăр лексен, –**
**Мĕн тейĕр эсир? – чăмăртанĕ мерчен.**
**Поэт чĕрине элекпе амантсассăн,**
**Мерченлĕ тăват йĕркепе вăл пирчет.**

Астиврĕм эпĕ пыл та йӳçĕ эрĕм,
Кунçулăм тĕрлĕ-тĕрлĕ килчĕ ман.
Саманине ăнлантăм пулĕ, терĕм.
Анчах çыннисене ăнланайман!

Ӗмӗрех йӗрки ҫапла пырать,
иптеш-туссем —
Пит кирлӗ чух анчах эпир
иптеш-туссем.
Хуратнӑ кӗмӗлтен-шим пирӗн кӑмӑл?
Мӗн каласси — эп хам та ҫав шутран,
иптеш-туссем.

**Кукаçи вĕрентсе каланиййĕ**
**килет асăма:**
**Ан вакла, – тетчĕ вăл, – сăмахна**
**ытлашши ан вакла.**
**Вăтăр икĕ шăл витĕр кăларнă**
**шалкамлă сăмах**
**Хура ут утланса çаврăнать**
**вăтăр икĕ яла.**

Лашине ытлашши мухтакан –
пĕр ухмах,
Арăмне ытлашши мухтакан –
тăр ухмах.
Кĕвĕçсе тăракан чиперкке арăмсемĕр,
Çак сăмахшăн пире кирлĕ мар
тарăхма.

**Салакайăкшăн пĕрех –**
**ун юрри те пур, те çук.**
**Ушкăн-ушкăн тем çинчен**
**йăлăхтармăш калаçу.**
**Пĕр турат çине ларса**
**икĕ шăпчăк юрламасть.**
**Çакăн пек танлаштарма**
**те юрать, те юрамасть.**

**Чăваш сăпайне тытаймарăн асра,**
**Ларасшăнччĕ, ахăр, ик ĕмĕр влаçра.**
**Çапла вăл тĕнчен майлаштарăвĕ, шайĕ:**
**Халь акă ларан решеткеллĕ лаçра.**

**Ĕненетĕн пулсан – пулатех Пуласси.
Ку вăл ман сăмах мар, ку вăл Турă сасси.
Малалла шак хурса ĕмĕтленнĕ ман ĕмĕт,
Тург лава малалла, – ку вăл Турă сасси.**

**Тухăçра, пĕлетĕп, çăлтăрсем те шухă,
Анăçра, пĕлместĕп, темĕншĕн салху кăшт.
Те хирĕçтăру ку, те ку килĕшӳ:
Тухăç вăл ӳкерчĕк, Анăç – анлă шухăш…**

**Ытла та лăпкă кĕркунне кăçал!**
**Ытам тĕнчи те тĕк тăрать кăçал.**
**Тавах Турра! – шайлаштаруллă кăмăл**
**Хама та питĕ килĕшет кăçал.**

**Уксах-чăлах пулма пултарăн –**
**ан васка.**
**Пÿкле-чикле вилме пултарăн –**
**ан васка.**
**Анчах ĕмĕрĕпех ăсла персен те,**
**Ăсчах-поэт пулаймăн –**
**ан васка.**

Кам çав халăх утаманĕ
пулнă-ши ун чух тесен,
Явап парăн-ши тӳрех эс
икĕ-виçĕ çул иртсен?
Шур хăлат вĕçевĕ евĕр
икĕ-виçĕ ĕмĕр иртсен –
Чăваша таçта та пĕлĕç
Хусанкай ятне илтсен.

**Тухăçран хĕвел тухать те**
**анăçа анса ларать,**
**Чалăш куçлă чăваша та**
**хăй çине вăл пăхтарать.**
**Никама та хăвармасть вăл айккине**
**ман çакă сăввăм:**
**Ыр çынна савăнтарать те**
**усала тарăхтарать.**

# КАÇАС КАÇАЛĂК

**Салам сана, иптеш Хасан Туфан!**
**Сăвву-юрру сан манăçа тухман.**
**Саманипе килĕштерсе пурнан çын**
**Нихçан та аслă сăвăç пулайман.**

Кашни япаларах илем, илем...
Ăçтан-ха тухнă çавăн чуль илем?
Ара, тĕнчемĕр пуçланман-и пирĕн
Пĕрре чăл-пар сапалансан Илем*!

* Илем — салма пысăкăш питĕ тăчă матери. Ăсчахсем каланă тăрăх, пирĕн Тĕнче, Хĕвел, çăлтăрсем çак Илем çурăлса салансан пулса кайнă.

Ĕмĕрлĕхе пырас пек туйăнать
Пĕр илнĕ вăй-хăват, хисеп те ят.
Инкек, пушар пек, тăруках тухать те,
Мĕскер пурри ялт çех çунса каять.

Ыранхине ан хапсăн — вăл сан мар,
Ёнерхине ан асăн — вăл сан маар.
Юхан шывра хёвел ташланă евёр
Паян, тăванăм, савăнса юлар.

**Каялла чупса каясчĕ хам ачалăха,**
**Çĕнĕрен вырма пуçласчĕ хам каçалăка...**
**Асилӳ, эс ывçăн-ывçăн сăвăр хывăха,**
**Сăвăр та хăвар пĕр кăшăл шур тасалăха.**

Тĕрĕслĕхпе ултав хушшинче
Пирĕн совеç пурнать сарă кайăкăн.
Хăш енче çав ултав, хăш енче?
Çавна çеç пĕлейместпĕр-çке лайăххăн.

Эй çын элекĕ! Вил çĕленĕ евĕр
Ман шăмă витĕр тухрăн шăхăрса.
Сар савăнăç çинчен паян пĕр евĕк
Ларайăп-и сар сăвă сăвăрса...

Мӗн чухлӗ хӑрушрах элек,
Ун чухлӗ — ӗненмеллерех.
Хам курнӑ эп ӑна, хам чӑтнӑ,
Сӑнни ак халь те чӗререх.

**Çур сехет тăракан асамат кĕперне**
**Кам пăхать темĕнччен!**
**Кĕçтентин, Кĕçтентин![*] Пĕр самант ĕмĕрне**
**Эп сăнатăп хальччен.**

[*] Константин Иванов — 25 çул пурăннă, «Нарспине» вунсаккăрта чухне çырнă.

**Инкек çук чухне пĕлмелле савăнма,**
**Кашнин куçĕнче çиçтĕр кулă.**
**Мĕн пур — çавăнпа та, мĕн çук — çавăнпа**
**Пурнар, тăвансем, çырлахуллăн.**

Хитре те калаçма вĕрентĕмĕр паян,
Хивре те калаçма вĕрентĕмĕр паян.
Кашлать çĕршывĕпех сăмах вăрманĕ!
Ау! Çула тухсассăн — аташса каян.

**Çил ачи, кунĕпе выляса ĕшенсессĕн,**
**Шур чечек варринче хутланса çывăрать.**
**Кам пĕлет? Кам пĕлет?..**
**Тен, ӳссе çитĕнсессĕн,**
**Вăл хурах кăшкăртса тĕнчене çавăрать…**

**Мĕнле хăватлă ăрăмлă пулсан та**
**Хăй шăпинчен, кала, кам иртни пур!**
**Çĕрте выртать, ав, кукăр мăйлă Сантăр[*]**
**Çĕрсе çĕр пулнă, ав, ухсах Тимур[**].**

[*] Александр Македонский.
[**] Тамерлан.

Тĕллев эп лартнă пысăк ĕç тума,
Васкатнă вăй виçмесĕр утăма.
Мĕн-ма, мĕн-ма эп Атăла курмасăр
Хывса пăрахнă çăмăл аттăма!

**Епле пит сыхлануллă çутçанталăк! –**
**Чи вăрттăн пӳлĕмне* касмасть вăл алăк.**
**Кассан-и? – аслă пурнăç тĕввине кĕрсе**
**Йăлтах арпаштарса пĕтĕрĕ пӳтсĕр алă.**

* Этем пуç мимийĕ.

«Çĕр юррине»[*] сăвва хурса пĕтертĕм,
Çĕр юрăпа тухипччĕ терĕм тертĕм.
Ĕнтĕ куççулĕме йĕрсе пĕтертĕм,
Тата пĕр кĕнекелĕх юлчĕ тертĕм.

[*] Авторăн «Çĕр юрри» ятлă уйрăм кĕнеки.

**Мĕн шырарăм çаплах? Чун çунать чăтма çук.**
**Çаврăнать кăлăхах, çаврăнать утма çул.**
**Вăхăт тÿррĕн çÿрет – кĕçĕн алăк умне**
**Çитсе тăнă та-мĕн 50 çул.**

Тăвату йĕркепе тăват енчен
Тĕкĕлесе хăвартăм шухăша.
Ма эп кайсан вăл, картана пĕччен
Хупса хăварнă хур пек, шуйхашать?..

**Сăпка ачи, тен, ăслăрах манран?**
**Эп сар садри саркайăкне курасшăн,**
**Вăл, авă, унăн юррине курасшăн.**
**...Сăпка ачи те ăслăрах манран.**

Çурма çула çитсе çул татрăм,
Çур тĕнчене умран çухатрăм.
Элле çапла çулран çул катăп,
Çут тĕнчене йăлтах çухатăп…

Ĕмĕрне те такăнмăп тенĕччĕ,
Ĕмĕрне те ватăлмăп тенĕччĕ.
Пăрнăç пулчĕ çулĕ – такăнтăм,
Пурнăç йывăр килчĕ – ватăлтăм.

**Пăлхаварлă тĕнчемĕр чир-чĕрне**
**Эс шут тытман-и, тусăм, пĕтерме?**
**...Мăн Атăл хĕрринче шур Шупашкарăн**
**Пур пульница, чиркў тата тĕрме.**

**Шухăшсене калатпăр тĕслесе:
Элекĕн аллисем кĕске тесе.
Пĕлместĕр-им? – ун урисем пит вăрăм,
Çитсе çавăрăнать пур кĕтесе.**

**Ан уттăр терĕн пулĕ урăхран –**
**«Ятарласа тĕллерĕн урараи».**
**Тем вăрăмăш патак та икĕ вĕçлĕ:**
**Паян йĕретĕп эпĕ, эс – ыран.**

**Асаттесем каланинчен пĕлен:**
**Хăй хӳрине хăех çăтать çĕлен.**
**Ан кĕрĕр çылăха, ан вараланăр, –**
**Элекĕпех чыхланĕ çынçиен.**

Ăслах пурнасшăнччĕ хĕпĕртесе,
Мĕн-ма ĕç-пуç ырать чĕрре кĕрсе?
Ялан телейлĕ пурăнас тесессĕн,
Пурăнмалла-шим ухмаха персе...

**Инкек-синкекӗм пулӗ чул ҫине,**
**Телей ахахӗ ҫӑвӗ пуҫ ҫине.**
**Ҫакна чӳклевҫӗ пек ӗненмесессӗн,**
**Хавшанӑ чун чӑтаймӗ чӑннине.**

Сана пусаймĕ, тĕрĕслĕх, тусан,
Эс путарсан та пурпĕрех тухан.
Анчах мĕне пĕлтерĕн эсĕ маншăн,
Ик-виç кунтан тĕнчем пĕтет пулсан.

**Тăваткăл мар – ик енлĕ çак тĕнче,**
**Ултав та чăнлăх – иккĕш ик енче.**
**Çав çырсене çапса юхать-мĕн пурнăç,**
**Хумсем вилеççĕ çав çырансенче.**

**Ыйткалакан çынна çил хирĕç пек,**
**Ума тухать инкек çине сиикек.**
**Çул суйласси хамран кăна килсессĕн,**
**Хама анчах, тен, айăплăттăм эп...**

Çыратăп сăвă чун савăннăран,
Çыратăп сăвă ăшăм çуннăран.
Митта, Митта! Ытла эс çывăх маншăн,
Тен, хам шăпам пÿкле çаврăннăран...

Шухăшлама пĕлен этемсене
Пÿрмен телейлĕ пурнăç ĕмĕрне.
Ухмах çынсем те выльăхсем телейлĕ –
Вĕсем пĕлмеççĕ вилĕм мĕскерне.

**Тупать те пурнăç хăйĕн еккине**
**Шавла тарать Пăла шарлакĕ пек.**
**Кам асăрханă? – сивĕ чул çине**
**Шыв çапăнать вĕри кăкăрĕпе...**

**Мана такăнтарма ман çул çине**
**Пăрахрăн хĕвӳнти арман чулне.**
**Эй, ăссăр çын! Эп, такăнса ӳксен те,**
**Унта хăйрарăм ăс çивĕчлĕхне.**

Тискеррĕн шăмарса, юна-юна
Халь тин пăрахăр хăратма мана:
Чăтса курнисемпе танлаштарсассăн,
Мĕскер вăл вилĕм! – çăлăнăç кăна.

Кĕве çисе ямасть-и кĕвĕçсе
Сире, хисеплĕ-чинлă сăвăçсем? –
Пĕр лайăх сăвă йĕркелетĕн те,
Пĕлсех тăр: пĕр тăшман тупăнатех.

Тавар илсе-ши, тетĕп, йӳн хакпа? –
Пит савӑнса ҫӳрерĕ пĕр аппа.
Епле туйса вӑл илнĕ йытӑ пек
Ман пуҫ ҫине килессине инкек?!

Шурă кăна шурă хăва çулçи,
Чĕре тымарĕ евĕр йĕрĕсем.
Хĕресленсе иртен утас çул-шим
Урлă çине тăрăх тымарĕсем?..

Ыр сĕмахпа ӳссех пырать вăй-хал,
Усаллипе — çур сăмахпах амантăм.
Çĕр пин ус пултăр пурпĕрех сахал,
Анчах та ытлашши-мĕн пĕр тăшман та.

Мĕн-ма пăшăрханатăн пустуях?
Çамку çине лартан пĕрме хутламĕ.
Сан сăввусем, пуш çурт пек, пуш-пушах, —
Пĕр вăрă та унта кĕме шутламĕ.

**Ют çĕршывра эс пулнă, Мускавра,**
**Тупра пуçтарнă, ылтăн та ахах.**
**Пĕлетĕн-и, пĕр сунтăх çĕр тавра**
**Çавăрăнсан та юлнă... сунтăхах.**

Ай курайманçĕ эпĕ çĕкленсен,
Ӳксен вара — тĕсси паха тееççĕ.
Кăшт шутласа пăхасчĕ хăть вĕсен:
Çĕрте выртакансем кăна ӳкмеççĕ.

**Ан вӑрҫӑр чӑн сӑмахшӑн хӑрушла,**
**Ан ҫакӑр ярлӑк тем ӑсла-ӑсла:**
**Эп вырӑсла вӑрҫатӑп, мухтанатӑп,**
**Анчах та макӑратӑп — чӑвашла.**

Ан çут эс çурта Сар хĕвел тухнă чух –
Çути ун мĕлке ÿкермелĕх те çук.
Хăвна чăн-чăнах тус теетĕн пулсассăн,
Эс пул-ха манпа эпĕ айăплă чух.

**Ан макăр, тăванăм, – куçу пăсăлать,**
**Куçу пăсăлать – кăмăлу хуçăлать.**
**Тĕнче – çил çинчи икĕ алăклă çурт вăл:**
**Пĕри хупăнсассăн, тепри уçăлать.**

**Анне каланийĕ килет асăма:**
**Хитре виçĕ кунлăх та, лайăх – яланлăх.**
**Хитре пулаймарăм, пулаймарăм-ши лайăх,**
**Вилсен, тăвансем лайăхпа асăнма?**

**Турра та çăмăл мар пире савма:**
**Ăсчах калană пек, пĕр-пĕр сывмар**
**Шăл ыратсан, эпир, ахтур, телейсĕр,**
**Ыратмасан – мĕн-ма телейлĕ мар?..**

**Мĕнле тĕнче ку?! – йăлт аптрамалла,**
**Шанса та калаçма хăрамалла.**
**Çапла, çын чунĕ – япала халькаççăн:**
**«Кăтартсанах – туртса илме пăхаççĕ».**

Кĕр кунĕ! Акă, ўкрĕ хыçăма
Хуралнă çулçă евĕр хыççăмах.
Кунсем кĕскелчĕç, шухăш вăрăмланчĕ:
Мĕскер кăна килмест пуль асăма!

Каллех? Каллех, унччен хиллех, тĕпче
Йăран пек вăрăм ĕмĕр вĕçĕнче
Çунасшăн-тăр пăлхавăр вутĕнче...
Пуç çаврăнать. Тен, çаврăнать тĕнче?

**Йăлтах тӳлевлĕ тĕнчере, эй-эй, –
Телейшĕн – хуйхă, хуйхăшăн – телей.
Анчах асаплă пурнăçшăн, тăванăм,
Мĕн-ма тӳлемелле вилĕмпеле!..**

Мала анчах, мала! Таса вăрçа
Каллех чĕнеççĕ çĕлĕк çавăрса.
Ăçта каян, этемлĕх, хăвăн хыççăн
Çăмхи-çăмхи кăвак кĕл хăварса?

**Тавах турра – шăвать-ха ерипе
Йĕркесĕр пурнăç хăйĕн йĕрĕпе.
Çапах… чуна хырса çăвас килет ман
Пăлан* шап-шур таса хăйăрĕпе.**

* Автор çуралса ӳснĕ вырăнти юханшыв.

Тĕнче – Багдад пасарĕ темелле,
Тивĕçтерсен таварĕ – хуш сумне.
Васкать этем, кумать калле-малле
Халь-халь тупас пек пурнăç тупсăмне.

Çĕрме пуян вăраххăн ватăлать,
Анчах мĕн-ма каять… сасартăках?
Пĕлсе пĕтер эс çутçанталăка:
Те хирĕçлет вăл, те шайлаштарать.

**Паллах, сана сунмастăп эп кĕтрет,
Ылханăм та ман çынлăхлă, хитре:
Кăшт пурăнса эс кур-ха ÿппĕн-теппĕн
Саманисем ылмашнă сехетре!**

Элле каллех! Историн аташса
Çӳренĕ самани çула тухать?
Чӳречерен пире вăл кармашса
Уксах Тимур куçĕсемпе пăхать.

**Тепĕр хут çуралаймастăп,**
**Тепĕр хут пурăнаймастăп.**
**Мĕншĕн, пурнăçăм, сана**
**Упрама хăнăхаймастăп?**

Сан пĕр тĕллев çак ĕмĕрте,
Мухтавлă сăвăç, –
Пĕр чĕптĕм совеç çук çĕрте
Шыра эс совеç…

Каç пулчĕ те – чинлă çынсем
Президиума хыпаланнăн,
Хаваслă кукша çăлтăрсем
Хăйсен вырăнне тухса ларнă…

**Тавăру – çĕнтерет вилĕме,**
**Чыс – ăна йыхăрать.**
**Юрату – пăхăнмасть вилĕме,**
**Хуйхă – хӳтлĕх шырать.**

**Хуралçăсăр патша иккен илем.**
**Ăна тытса та кайĕччĕç, анчах**
**Вăл хăй сана тӳрех тытса илет.**
**Эй, асăрхан, мăнкăмăллă ăсчах!**

**Епле чее хăшпĕрисем тата! –
Вутпа шыва пĕр савăтра тытасшăн:
Поэт пек хытă юратасшăн та,
Ăсчах пек лăпкă, ăслă та юласшăн.**

Вылямалли тесеччĕ ылтăна,
Парнелĕх çеç тесеччĕ эп ăна, –
Куратăр-и, хĕрарăма çех мар вăл,
Çут тĕнчене илнĕ тыткăна.

Тĕнче мыскарине кăшт хăнăх та
Е хурлама, е мухтама тăхта.
Пĕр çын инкекĕ мĕн вăл çут тĕнчешĕн, –
Ав, кӳршĕре тăваççĕ çĕнхăта.

Усал сăмах кĕрет сăмах шутне,
Хăрушă каç кĕрет кун-çул шутне.
Сана та пурнăç темелле-ши, хуйăх, –
Кĕретĕн эс те пурăнни шутне.

Çырта-çырта пăрахнă улмана
Камах çĕклетĕр! – калăр-ха мана.
Çур тĕрĕслĕх мана хурса паратăр,
Çур тĕрĕслĕх те пур пек саманан.

Çылăхлине – вĕри çавра çатма,
Çылăхсăра – ытарайми çăтмах.
Ялан çапла шутлаттăмччĕ, анчах та
Хăшсем пĕлеççĕ варрипе утма.

Пурнăçăмра чăтма çук йывăр чух,
Тапта-тапта мана пытарнă чух
Эп турăш умĕнче чĕркуçленмерĕм,
Усал умне те эп ўкессĕм çук.

**Йăпăлтатас йăла-йĕркесене,**
**Тавах, паман Исмук йăхĕсене.**
**Министр пуличчен, атте каларĕш,**
**Куçран калам тӳрех тĕрĕссине.**

**Кам ăнлантарĕ чун мĕн иккенне? –**
**Е кăткăс ăнлану вăл, е матери?**
**Анчах хăш çыннăн чунĕ çуккине**
**Тўрех куратăн…**

Ялан ан чав эс чĕрĕ çăлкуçа,
Хăй çулĕпе юхсан вăл сиплĕ, тăрă.
Нумай пурнас тесессĕн пурнăçа
Ыр ĕмĕтне кăна пӳлме ан тăрăш.

Хура пустав хĕвел пайăркине
Çаплах тăранаймасть çăта-çăта.
Çапах вăл пулаймарĕ каç енне
Хĕвел те, пĕчĕк лаптăк çутă та.

**Пурнасшӑн пуль виҫ ӗмӗр хӑшӗсем:**
**Хыткукарла япаласем пухаҫҫӗ.**
**Паян-ыран вилес пек теприсем:**
**Мӗн пуррине тӑккаласах тӑраҫҫӗ.**

Ултавçăсем ĕлĕкренех чысра.
Улталăр, сутăр пĕр-пĕрне часрах!
Анчах ăнланăр, тĕнчене сутаймăр
Чавсаланса ларсассăн та влаçра.

Кăштах пулсан та тĕпренет чĕре
Элек-мелек сăмах илтмессерен.
Çапла, хурсем варланă çĕр çинче те
Пĕр вăхăт шăтаймасть вара çерем.

**Мĕн чухлĕ илнĕ пулнă, çавăн чуль**
**Вут, çуннă май, тухать хĕвел ăшшийĕ.**
**Поэт ăшчикĕ вут пек çуннă чух**
**Ăçтан тухать хăрўлĕх ытлашши те?..**

Епле?! – тĕлĕнет мана вилĕм сунанĕ, –
Аманнă, çапах унччен хăватрах!
Пĕлмест вăл, айван, çĕнтерÿçĕ суранĕ
Пирчет хăвăртрах.

**Шурă пÿспе, пĕлиспе чĕркесе вырттарар-и,**
**Шурă аппамăр сана…**
**Ĕçрĕмĕр-çирĕмĕр – халь тиркесе пытарар-им,**
**Çирĕммĕш ĕмĕр, сана.**

**Текех ан калăрсамăр, тетесем,**
**Çак пурнăç тутине пĕлес тесен**
**Инкек-синкек астивмелле тесе, –**
**Тăварлипе тăварсăрне пĕлмешкĕн**
**Ĕçсе ярас-им çакă тинĕсе…**

Ах, лавр кăшăлĕ – асаилӳ:
Епле хитреччĕ эп, епле патварччĕ!
Мухтав тăрук маттур утне тăварчĕ,
Тулли лавне уй варринчех хăварчĕ...
Ах, мăшкăл кăшăлĕ – асаилӳ.

**Асаттесен вăхăтĕнчех**
**Пĕр майлă çаврăнан тĕнче**
**Пĕр майлă çех шутлаттарать:**
**Ĕнер-паян, паян-ыран…**
**Çапах та каялла пыран.**

**Пӳртре те тĕксĕмленчĕ, тăвăрланчĕ.
Уç чӳрече каррисене, аппа.
Хура куççем хуралчĕç, чун хурланчĕ,
Аса илсессĕн иртнĕ асапа.
Уç чӳрече каррисене, аппа.**

**Сӳнсе пыракан хĕвеле анăçран
Калла тавăрасчĕ, калла пурăнасчĕ…
Тавах, тăвансем, ытарми пурнăçран
Сăйла хăнаран кайнă евĕр каясчĕ:
Çисе пĕтермесĕр, анчах – выçă мар,
Ĕçсе пĕтермесĕр, анчах – ӳсĕр мар.**

**Каллех эп çапăнсассăн кĕтесе,
Ан ляплантар мана текех, тăванăм,
Ку – ăнсăртран, ку - ăнсăртран тесе.
Пĕлетĕп эпĕ: пурнăçăм та манăн
Ăнсăртлăхран тăрать. Итле, поэт,
Пĕр вилĕм çеç хăй йĕркипе килет.**

Поэт, поэт! Синкер влаҫ умӗнче
Гном евӗр эсӗ – вӑйсӑр, пӗчӗкҫеҫҫӗ.
Сӑмах чӗнме-и! ав, хыр тӑрринче
Аманнӑ выльӑх ӳкессе кӗтеҫҫӗ
Хура пӗлис сӑхманлӑ ҫӑхансем.
Кша-кша, кша-кша, виле ҫиекенсем!

**Çăлкуç çине кам хунă йывăр чул?**
**Кам пултăр! – пĕр чăваш, пĕр кĕвĕç Каин*.**
**Анчах, – эй чĕрĕ чун! – чулрав чул айĕн**
**Çăлкуçĕ тупнă авă урăх çул.**
**Унччен ăнатчĕ философи ĕçĕ,**
**Чул хунă хыççăн уçăлчĕ поэзи.**

* Этемлĕх историйĕнче пĕрремĕш çын вĕлерекен.

Чи кĕвĕç чунлă халăх кам тесен,
Тӳрех йăваш чăваш тесе тĕсен…
Анчах пĕр аршăнпа виçмешкĕн тăхтăр
Ку тĕрĕс те, ку терĕс мар тесе:
Пиççе çитмен чăваш сăвăçисем
Лараççĕ, авă, пĕр-пĕрне çисе.

**Ытлашши юратмарăм-и эпĕ сана,**
**Ытарми çутçанталăкăм?**
**Ытлашши хак хумарăм-и эпĕ сана,**
**Ыр тума маннă халăхăм?**
**Чăнлăхран хитререх пурнăçран**
**Кайма йывăр пулать...**

**Сар савăнăç çул иртнĕçем сÿнсе
Пулать-шим тунсăх, тĕссĕр тутăр евĕр?
Унччен туйра-çуйра янранă кĕвĕ
Ура айнех, ав, ÿкрĕ сĕвĕнсе.
Ах, вăхăт! Вăхăт хăйĕннех ĕçлет,
Калла кайма Турри паман меслет.**

Эпир çак тĕнчене мĕскершĕн килнĕ? –
Тен, пурнăç тупсăмне тупасшăн килнĕ…
Пуçна ан ват, ăсчах, ан асаплан –
Турри ăна пире пĕлме паман.
Апла, тултар, тăванăм, куркуна,
Пĕр уссăрах ирттерер мар куна.

**Çын вырăнне эс йышăнатăн тейĕн,**
**Çын пурнăçне эс пурăнатăн тейĕн, –**
**Ыгла нумай пурнать Марье тесе**
**Кĕве чунсем тăраççĕ кĕвĕççе,**
**Хăйсен çулне хăйсем, тен, кĕскетсе.**

Мухтавлă Хĕвелтухăç ывăлĕ, Омар Хайям,
Каçарăн-и? – паян сана хирĕçлеме хăям:
Патша кĕрекинче эс сахал мар сăйланнă,
Чи тутлă çимĕçсем эс сахал мар суйланă,
Çапах та, о поэт, хĕрарăмпа эрех
Тĕнче тăпси пулаяс çук пĕрех.

Тавралăхăм тытать-ха тăптăма:
Чалăштарах карттуслă сар хырсем те,
Шап-шур тăла чăлхаллă хурăнсем те
Чечексене хăймаççĕ таптама.
Çынра çук çынлăх пур иккен вĕсен,
Çакна курмаççĕ-шим çынçиенсем!

**Ахах пĕрчине хутăм çутă çине –
Ан тив, курччăр терĕм, таса çутине.
Анчах, курăр-ха, ман ахах тĕксĕмленнĕ!
…Текех чунăма уçас çук çынсене.**

**Уй-уяв! Кĕтсе илтĕм сана эп аран.**
**Савнăç, тух виçерен!**
**Ах-анчах!.. çын сăмахĕ, мана пăтаран**
**Эс хăçан вĕçерен?..**

**Тӳре пек çут тĕнче те йăнăшать,**
**Çавна курса ман чунăм йынăшать:**
**Мĕн-ма тискер çынна вăл пурнăç панă?**
**Мĕн-ма сутăнчăка çĕр йышăнать!**

Эп савăнса, пĕр чĕптĕм вĕчĕхӳсĕр
Каяс чухне пĕртанлăх тĕнчине
Ма хурланатăр, ма йĕретĕр эсĕр,
Тăванăмсем, хĕвел аничченех?..

Йĕрсе çуралнă чух эп çак виçесĕр
Танмарлăх, тĕрĕсмарлăх тĕнчине
Ма савăнса-кулса ташланă эсĕр,
Тăванăмсем, тул çутăличченех?

**Туссене тупаççĕ теççĕ çамрăк чух,**
**Ватăлсан шутлаççĕ теççĕ вак укçа.**
**Эп çакна асилтĕм темшĕн ĕçнĕ чух,**
**Куç умне вара чăлт тухрĕ ват Ухсай.**

**Тархасшăн калăрсамăрччĕ мана:
Кам курнă пĕр çыранлă çырмана?
Эпир санпа тату пурăнмасассăн,
Юхатчĕ-и çак пурнăç аванах.**

Ăçта ĕмĕрлĕхе тесе шутланă
Этем мухтавĕ-чапĕ? – калăр-ха.
Ав, мăй таран хура çĕр çăтса янă
Такам ятне çĕкленĕ палăка.

**Сенкер шăрçа çумне сенкер ахах**
**Сиктермесен, чалма-сурпан илемсĕр.**
**Ача-пăчасăр çын яланлăхах,**
**Ĕмĕрлĕхех – телейсĕр.**

Мана курсан эрнипелех пӗр йӗксӗк
Ҫӳрерӗ тӗксӗм пӗлӗтрен те тӗксӗм:
Аҫтан вӑл сиснӗ-пӗлнӗ ман тӗле
Паян килсе ҫитессине телей?!

**Ма хӑрас вилӗмрен! –**
**Пӗчӗкçеç телейпе юнашар шӑтакан**
**Пысӑк-пысӑк инкек те ӳкет шӑтӑка.**
**Ма хӑрас вилӗмрен?..**

**Пĕр çылăхлă тееççĕ ухмаха,**
**Çĕр çылăхлă тееççĕ ăсчаха.**
**Апла пулсассăн, калăрсамăр, мĕншĕн**
**Аçа çапать малтан тăр-ухмаха?**

**Хутла пĕлен çынна сума сăвас**
**Йăла-йĕрке те пĕтрĕ, мĕн тăвас.**
**О Диоген*! Ан хăтăр ухмаха эс:**
**Çурт-йĕрĕпе халь мухтанать чăваш.**

* Диоген — ĕлĕкхи грек философĕ, пичĕкере пурăннă.

Çур килчĕ те кĕркуннепе каять
Кикак хуркайăк – тунсăхлăх янравĕ.
Усал-и, ырă-и – пĕр илнĕ ят,
Кирлех-и, çук-и – ĕмĕрлĕх санра вăл.

**Чун хушшинче йӑл илнӗ чун-чӗремӗн**
**Саккунӗсем урӑхла мар иккен:**
**Чуна ҫынпа уҫса калаҫнӑҫемӗн**
**Ман хуйхӑм та иртсе пырать иккен.**

Тумхахлă çулпа çÿресе эп ĕшентĕм,
Халь пĕчĕк хуйха та чăтаймăп-ши ĕнтĕ?..
Шап-шурă шăл çеç-и? – вĕри сывлăшпа
Ванса тĕпренеççĕ мунча чулĕсем те.

**Паян – пурне те ĕненетĕп,**
**Ыран – каллех иккĕленетĕп.**
**Мĕн тăвăн! – пурнăç шыравра,**
**Шыравĕ – пурăнăç тавра.**

Камран килет, мĕнрен? – шутлан, минрен:
Ирĕксĕрген тĕнче касса çӳретĕн.
Ăсчах ăс пуçтарать ăс çитменрен,
Ухмах çынна… ăс кирлĕ мар пĕрре те.

Çут уйăх айĕнче хура вăрман…
Тĕнче тени пĕрре те улшăнман.
Сăввăмсенче çын шухăшне курсассăн,
Туссем, каçарăр, пурнăç улшăнман.

**Кашниййӗн хӑйӗн хакӗ: вилӗме**
**Ҫав хаклӑш пурнӑҫ кирлӗ тӳлеме.**

**Ан калаç, ан пайла**
**хăвна çеç тивекен телейне —**
**Ĕçтешӳ, сутăç пек,**
**ыранах тыттарать кĕвĕçӳ тӳлевне.**

**Гегель пек ӑслӑ пулсан та**
**ан хӗсӗрле эс чунна,**
**Чун вӑл — черченкӗ хӗрарӑм,**
**эсӗ пӗлмен-им ҫавна?**

**Вĕçевĕ пур пек, кайăкĕ хăй çук.**
**Çапла-шим ÿт-пÿрен чун кайнă чух?..**

**Кăмрăкланать шап-шур çурта çиппи, —**
**Инкекĕм, эс те çунса кай эппин!**

Такăнсан та ан ылхан эс,
укçалла илмен куна —
Лайăххи те, начарри те —
пурăннă чухне кăна.

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

## Астивсе илмелĕх

## ТУПМАЛЛИ


**Патшалăх премине пана май калама хатĕрлесе хунă сăмах** ........................................ 3
**«КАÇХИ АТĂЛ» ЯРĂМРАН** .............................. 7
Пĕр лаптăк Ази хăйăрĕ. хăвалăх........................................ 8
Пурах иккен хăвачĕ пыл-сăран ........................................ 10
Латинла «profani procul ite ........................................ 12
Ача пек Атăл тĕлĕкне кĕрсе ........................................ 14
Çул юппинче тăран пĕр юланутçăн ........................................ 16
Пăрçа хирне пытаннă ман ачалăх ........................................ 17
Адам чухнехи виноград авăнать, явăнать ........................................ 18
**ВĂХĂТ ВИТĔМĔ** ........................................ 19
Сар хурăнлăх çумĕпеле пур хырлăх та ........................................ 20
Эп Вăхăта шурă пĕлĕт тесе ĕненеттĕм ........................................ 21
Мĕн хăвăрт иртет çакă çут тĕнчере? — калăрсамăр мана ......... 22
Ан ыйт ытлашши — кивçен парас çук Пихампар ........................ 23
Шурă çўçлĕ кăлкан хирĕпе вĕçтерсе иргрĕ тейĕн хасар ............. 24
Çирĕммĕш ĕмĕр! Ăна эп ĕшеннĕ пуль теттĕм ........................ 25
Иртнĕ кун шăтăка, çĕр тĕпне, çылăх евĕр тĕртет те тĕртет ......... 26
Мĕнле çитĕнў? — шăхăрса иртсе кайрĕ ку çул ........................ 27
Каялла тăвалла çаврăнса пăхрăм та пурнăçа............................ 28
Ача пек таса ирхине те тăп-тăр кăнтăрла та ........................ 29
Савăн, сывлăх çăл пек тапса тăнă чухне ........................ 30
Мĕн вăл сан пурнăçу? — кĕлчечекĕ кăна ........................ 31
Паянхи кун çути килес çук ахрăм евĕр — ыран ........................ 32
Эпир çак тĕнчене хитрелетмешкĕн килнĕ ........................ 33
Пиртен килмест иккен çут уйăх туласси ........................ 34
Пĕр çăлтăр çутăлать — çын çуралсан ........................ 35
Çуралнă эпĕ Арапуçĕнче ........................................ 36
Вилме эп выртсассăн, мĕскершĕн йĕретĕр пит ĕсĕклесе ......... 37
Тин çеç-ха çурхи чечексем чашкăрса ешеретчĕç ........................ 38
Çапла, çуралнă кун мухтаççĕ тем чухлех ........................ 39
Синкерлĕ кунра пĕр самант та пĕр çул пек иртет ........................ 40
Ан курнăçлан ытлашши ĕмĕр йўтемĕп тесе ........................ 41
Çисе çитсен анмасть-мĕн пĕр турам та ........................ 42
Элле пуянланать эп çуралсан тĕнче ........................ 43
Чĕре çурăлмаллах кам хуйăх тўссе курнă ........................ 44

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

## Астивсс илмслĕх


Ĕнер кăна тăван-пĕтен çӳретчĕ пасарта ........................... 45
Мĕншĕн эсĕ урăх çын пулмарăн ........................... 46
Вăхăтпа выляççĕ тейĕн сӳс пăявĕ туртмалла ........................... 47
Пуçтарăнсан ман «Хĕрĕхмĕш куна» ........................... 48
Вунçиччĕмĕш çул. Ав, таçта, вăтăр çиччĕмĕш çул ........................... 49
Сăвă садне кĕнĕ чух эпĕ пит шухă ачаччĕ ........................... 50
Пĕр шутласан, пурнăçра темĕн те лекрĕ пире ........................... 51
Сĕтелĕм майпен пушансан, кĕр сывлăх пĕтсен ........................... 52
Поэзире, паллах, ăс кирлĕ чи малтан ........................... 53
Çурхи уçă çил-ши чӳхет çӳхе чӳрече чĕнтĕрне ........................... 54
Пыл та пит йӳçĕ иккен пысăккăн, ытлăн сыпсан ........................... 55
Эсĕ, тирпейлĕх, пуян çын кил-çуртне мĕн таран ........................... 56
Итлĕр мана, салтака, тăнлăр, вылявлă яш-кĕрĕм ........................... 57
Чап та хисеп, эп сире йыхăрмăп пит хистесех ........................... 58
Эп – Исмаэль юнĕнчен килекен тавăру йăлине тытакан ........................... 59
Кирлех-ши, тăван, паллă сăвăç пулма Чăвашрат ........................... 60
Сăвăç чапне хапсăнан çамрăк сахал-им халькаççăн ........................... 61
Шупашкартан инçех те маар ман пĕчĕк çуртăм пур ........................... 62
Сăмаха каличчен пĕрчĕн-пĕрчĕн сăвас ........................... 63
Хĕвелĕмĕр! Тĕнче варри, чĕре варри, Хĕвелĕмĕр ........................... 64
Алран ямарăн пурнăç йĕвенне ........................... 65
Чуна çунтарса эпĕ татăп Хĕвел умĕнчи парăма ........................... 66
Мĕн хушса калам çĕнни мухтаса сана, Анне ........................... 67
Хăш чух Аннем тĕлĕкĕме килет ........................... 68
Хăш чух аннем тĕлĕкĕме килет ........................... 69
Хăш чух аннем тĕлĕкĕме килет ........................... 70
Чечексем чечен, теетпĕр, çак сăмах вăл – тĕрĕсех ........................... 71
Этемрен хăруш чĕрчун вăл çук та пулĕ çĕр çинче ........................... 72
Ĕлĕкрен пырать сăмахĕ –пасарта пур ик ухмах ........................... 73
Ай, ăçтан хăват çитертĕм ун чухне эп ун чухлех ........................... 74
Çука юлатчĕ-им эп пулмасан тĕнче ........................... 75
Йывăç ӳсет ăшă çумăр çусан – ăнсăртран ........................... 76
Çӳл вĕренен те хăçан та пулсан – ӳкмелле ........................... 77
Эп пурăннă чух маншăн вилĕм пулмасть – пăх та кур ........................... 78
Эй тĕлĕк темерĕн: умри утма çулăм – шур пурçăн хăю ........................... 79
Пĕр шухăш талать те – тăрук такăнатăн ........................... 80

## Астивсе илмелĕх

**«ÇĂЛРИ ÇĂЛТĂРСЕМ» ÇАВРĂМРАН** ........................ 81
Ĕненĕр çутçанталăк саккунне ........................ 82
Ĕнтĕ тăр шыв юхать, сив чул юлать ........................ 83
Эп çынлăх пур-ха теттĕм çынсенче ........................ 84
Çынна çултан мĕскер аташтарать ........................ 85
Ĕнтĕ хĕвел тухать, хĕвел анать ........................ 86
Çак çутçанталăк ырлăхне – пехил ........................ 87
Епле вĕçетчĕ кайăк савăнса ........................ 88
Суранлă чунăмра чуралăх çук ........................ 89
Чыслах пурнас тесен – кĕрешмелле ........................ 90
«Телей вăл – телее кĕтни кăна» ........................ 91
Элле эп, тин çуралнă ачалла ........................ 92
Пурнăçăмра чăтма çук йывăр чух ........................ 93
Çынран эп çех-ши катăк, тупата ........................ 94
Эп айăпа кĕрсен, çынсем мана ........................ 95
Чĕнмен-çке çут тĕнче мана ĕçке ........................ 96
Шухăш пулать теççĕ ăшă çил ........................ 97
Ан тив, мана кураймансем туллаччăр ........................ 98
Синкерлĕхе ăнланăр самаях ........................ 99
Тав куркийĕ хыççăн çул курки ........................ 100
Çĕр туртрĕ – йывăрлатрĕ уттăма ........................ 101
Тăванăмсем, хитре тăванăмсем ........................ 102
Çавăрăнса саланчĕ çăварни ........................ 103
Çурма çула çитсе çул татрăм ........................ 104
Ĕмĕрне те такăнмăп тенĕччĕ ........................ 105
Хĕвеллĕ кун мĕлкем çӳрет пĕрлех ........................ 106
Тĕнче тытакансем, çĕр тĕкмисем ........................ 107
Танлантару та шырамастăп урăх ........................ 108
Чулран касса кăларнă Нефертити ........................ 109
Хуçасем çапăçаççĕ. Ан кай ........................ 110
Вĕçленчĕ пуçланă ĕçу ........................ 111
Тĕнчере пĕртен пĕр танлăх – вилĕм ........................ 112
Тем пысăкăш ыйту палли – тĕнче ........................ 113
Икке пайлать пурне те шухăш ман ........................ 114
Пĕр пус укçам та çук – текех ан мухтăр ........................ 115
Çынна эс ыр тумашкăн ан васка ........................ 116

Мĕн çăмăл тĕнчере, мĕскер ансат ........................................ 117
Епле çиет ахах пĕрчи куçа ........................................ 118
Микротĕнче йĕрки-шим чун-чĕремĕн ........................................ 119
Пĕлетпĕр: пурте, пурте çул çинче ........................................ 120
Çын лайăха кăна пăхать пĕрмай ........................................ 121
Хăв ĕçлесе илмен япалана ........................................ 122
Ырсем виç пуçлă усала çĕнсен ........................................ 123
Кирлех те мар пек япала пур чух ........................................ 124
Хăй тĕллĕн çитĕнет усал-тĕсел ........................................ 125
Епле ан пултăр чунлăх чунсенче ........................................ 126
Хĕрхӳ асаилӳ пек, яланах ........................................ 127
Хур тĕкĕпе çырсан та, курăр-ха ........................................ 128
Кăнтăрлахи хĕвел ăшшипелен ........................................ 129
Мĕн каласа парсассăн та пĕрех ........................................ 130
Ăçта вăл тĕрĕслĕх, хăш çĕрсенче .. ........................................ 131
Тăванăмсем, пулар-и пĕр кавар ........................................ 132
Ура çине хура ĕне пуссан ........................................ 133
Сăввусем салху тесе калатăн ... ........................................ 134
Мĕнле пĕлмен эп халиччен, ухмах ........................................ 135
**ТĂВАТКĂЛ ТĔНЧЕ** ........................................ 136
Пире, чăваша, сыхласа усрама килнĕ Пӳлĕх ........................................ 137
Ыр ту та çынна, ун çинчен манса кай эс, ыр çын ........................................ 138
Кăвак çилхеллĕ шур çиле хупăрласа эп тытрăм ........................................ 139
Кăвак çилхеллĕ шур çиле хупăрласа эп тытрăм ........................................ 140
Эп — уçă алăклă çурт. Вĕр, саманташ-самана ........................................ 141
Ĕлĕк поэт патшапа ларнă пулсан юнашар ........................................ 142
Ассăр ачалăх пуçтарнă икĕ кĕсье шур тетте ........................................ 143
Хитре пурнас тесен — итле эс Хайяма ........................................ 144
Палламан çынпа нихçан та ан калаç эс ӳсĕрпе ........................................ 145
Шăхлич çине кăвак шăрçа хурса юрлать пĕр кайăк .. ........................................ 146
Эп сар хĕвелччĕ ун чухне, эп ун чухне чĕкеçчĕ ........................................ 147
Чăлт шурă, шурă тутăрпа шур кĕмĕлне тасатрăм ........................................ 148
Телей те инкек хушшинче эс мĕн чухлĕ ан пурăн ........................................ 149
Сурăх çухалчĕ пулсан – хуйăх пусать хресчене ........................................ 150
Кам чухламасть ăна! – Арçын вăл яланах ........................................ 151
Çут çăлтăрсен ушкăнне çил хăвалать, аркатать ........................................ 152

## Астивсе илмелӗх

Хавшанӑ Пӑла хум ухать юлашки вӑйӗпе хаш та хаш ........... 153
Пӗр тӗлӗке икӗ хут, виҫӗ хут курма пулӗ, — эккей ............... 154
Шӑпчӑк юрри чунӑма сарӑ пикен ыталарӗ – эккей ............... 155
Таса хирсенче пирӗшти пек таса хӗр ӗҫленӗ – эккей ............. 156
Пӑлхар ялавне кӗмӗл кӳлӗ чӳхенӗ – эккей .......................... 157
И тӑвансем, тӑвансем, эпӗ сире, тӑвансемӗр ........................ 158
Сӗм ӗмӗрсен шавӗнче чӑн чӑвашла сас шыратӑп ................ 159
Тӗрӗслӗх халь ҫынсенче – хаклӑ ахах шутӗнче ..................... 160
Эп ӑсчахсен ҫӑршывне кайса куртӑм – рехмет .. ................. 161
Мӗн вӑл эпир пурӑнни – лӑпкӑн вилме вӗренни .................. 162
Пирӗн ӑшра, ӳт-пӳре, турӑҫӑм, шыв та тӑпра ....................... 163
Пурнӑҫ – хӗрарӑм иккен. Пурнӑҫ хӗрарӑм кӑна ................... 164
Тӑхӑмсенче уссӑрах эпӗр шыратпӑр тӗрек ........................ 165
Улӑх кӑкрийӗ ҫинче пӗр хурчӑка явӑнать ............................ 166
Мӗншӗн ытла пысӑк уйӑх пӗчӗк ҫурта ҫумӗнче ................... 167
Чунӑм – тӗнче хӗрринчи пӗчӗк, таса кӳлемек ....................... 168
Вӑй ҫитерсе сулӑмпа ҫапаймасан – чул калмасть ................ 169
Кам пултарайӗ пӳлме аслӑ хӗвел ҫаврӑмне .. ....................... 170
Эсӗ пӗлмен-им, Сократ, шухӑш хуҫи, ун чухне ..................... 171
Шурӑ чулран пӳ-сине чун вӗрсе кӗртнӗ шур Анна ............... 172
Тен, ӗмӗлке хыҫӗпе ҫутӑ ҫӳрет? – кам пӗлет ........................ 173
Тӳнчӗҫ хитре палӑксем, сӳнчӗ суя ӗненӳ ............................ 174
Сар ылтӑн ҫӗррӗме ҫухатрӑм та – ҫур кун шырарӑм .............. 175
Эп телейлӗ чухне пӗр ҫавра тӗкӗр пекчӗ тӗнче ...................... 176
Уйӑх та мар эп, тӑван, кӗр каҫӗнче ҫуталан ............................ 177
Хӗр-патша Семирамида чечексем юратнӑ, тет ..................... 178
Эс айӑплӑ, теес, эрех-сӑра ӗҫнишӗн ...................................... 179
Юр чӳхенет ҫӳхен – шур хӗл киленчӗкӗ ............................... 180
Сӑрлан ҫырли эрехӗ кӑпшӑмра ........................................... 181
Чунран савман савни, ай, савни мар .................................... 182
Тата мӗнле рай кирлӗ урӑхран ............................................. 183
Ҫыратӑп сӑвӑ — кам вулать ӑна ........................................ 184
Аҫам ҫине хурам аҫа чула .................................................. 185
Пире тӗнчене кӑларан Андриан ........................................... 186
Кӑпчак инҫетлӗхӗ, чӑваш виҫелӗхӗ ..................................... 187
Шӑрӑх тӑраҫь-и, е талӑк та талӑк ......................................... 188

## НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

### Астивсс илмелĕх


Тĕл-тĕл яр çиçĕм çиçнĕн каçхине ........................ 189
Ик çутă çăлтăр евĕр куçусем ........................ 190
Паян кăштах эп хĕрĕнкĕ пулас ........................ 191
Ыйткалакан çынна камах итлетĕр ........................ 192
Кăштах чун пур пек чĕрĕ кĕмĕлте ........................ 193
Изидăн пĕркенчĕкĕ уçлăх таран ........................ 194
Халь-халь вĕçсе анас пек çулçисем ........................ 195
Кунĕпе юхсан та иксĕлмест Пăла ........................ 196
Йĕп чиксен те куç курмийĕ пуличчен ........................ 197
Йĕп тирме те куçăм çивĕччĕ ........................ 198
Лайăх асаилӳ сăра пек ........................ 199
Кун-çул вĕçне тухнă çулçӳрен ........................ 200
Çумри юлташăмсем лайăх манн ........................ 201
Шапа хуранне пĕрчĕк хăйăр лексен ........................ 202
Астиврĕм эпĕ пыл та йӳçĕ эрĕм ........................ 203
Ĕмĕрех йĕрки çапла пырать. иптеш-туссем ........................ 204
Кукаçи вĕрентсе каланийĕ килет асăма ........................ 205
Лашине ытлашши мухтакан – пĕр ухмах ........................ 206
Салакайăкшăн пĕрех – ун юрри те пур, те çук ........................ 207
Чăваш сăпайне тытаймарăн асра ........................ 208
Ĕненетĕн пулсан – пулатех Пуласси ........................ 209
Тухăçра, пĕлетĕп, çăлтăрсем те шухă ........................ 210
Ытла та лăпкă кĕркунне кăçал ........................ 211
Уксах-чăлах пулма пултарăн –ан васка ........................ 212
Кам çав халăх утаманĕ пулнă-ши ун чух тесен ........................ 213
Тухăçран хĕвел тухать те анăçа анса ларать ........................ 214
**КАÇАС КАÇАЛĂК** ........................ 215
Салам сана, иптеш Хасан Туфан ........................ 216
Кашни япаларах илем, илем ........................ 217
Ĕмĕрлĕхе пырас пек туйăнать ........................ 218
Ыранхине ан хапсăн — вăл сан мар ........................ 219
Каялла чупса каясчĕ хам ачалăха ........................ 220
Тĕрĕслĕхпе ултав хушшинче ........................ 221
Эй çын элекĕ! Вил çĕленĕ евĕр ........................ 222
Мĕн чухлĕ хăрушрах элек ........................ 223
Çур сехет тăракан асамат кĕперне ........................ 224

## Астивсе илмелĕх


Инкек çук чухне пĕлмелле савăнма ........................................ 225
Хитре те калаçма вĕрентĕмĕр паян ........................................ 226
Çил ачи, кунĕпе выляса ĕшенсессĕн ........................................ 227
Мĕнле хăватлă ăрăмлă пулсан та ........................................ 228
Тĕллев эп лартнă пысăк ĕç тума ........................................ 229
Епле пит сыхлануллă çутçанталăк ........................................ 230
«Çĕр юррине» сăвва хурса пĕтертĕм ........................................ 231
Мĕн шырарăм çаплах? Чун çунать чăтма çук ........................................ 232
Тăвата йĕркепе тăват енчен ........................................ 233
Сăпка ачи, тен, ăслăрах манран ........................................ 234
Çурма çула çитсе çул татрăм ........................................ 235
Ĕмĕрне те такăнмăп тенĕччĕ ........................................ 236
Пăлхаварлă тĕнчемĕр чир-чĕрне ........................................ 237
Шухăшсене калатпăр тĕслесе ........................................ 238
Ан уттăр терĕн пулĕ урăхран ........................................ 239
Асаттесем каланинчен пĕлен ........................................ 240
Ăслах пурнасшăнччĕ хĕпĕртесе ........................................ 241
Инкек-синкекĕм пулĕ чул çине ........................................ 242
Сана пусаймĕ, тĕрĕслĕх, тусан ........................................ 243
Тăваткăл мар – ик енлĕ çак тĕнче ........................................ 244
Ыйткалакан çынна çил хирĕç пек ........................................ 245
Çыратăп сăвă чун савăннăран ........................................ 246
Шухăшлама пĕлен этемсене ........................................ 247
Тупать те пурнăç хăйĕн еккине ........................................ 248
Мана такăнтарма ман çул çине ........................................ 249
Тискеррĕн шăмарса, юна-юна ........................................ 250
Кĕве çисе ямасть-и кĕвĕçсе ........................................ 251
Тавар илсе-ши, тетĕп, йўн хакпа ........................................ 252
Шурă кăна шурă хăва çулçи ........................................ 253
Ыр сĕмахпа ўссех пырать вăй-хал ........................................ 254
Мĕн-ма пăшăрханатăн пустуях ........................................ 255
Ют çĕршывра эс пулнă, Мускавра ........................................ 256
Ай курайманçĕ эпĕ çĕкленсен ........................................ 257
Ан вăрçăр чăн сăмахшăн хăрушла ........................................ 258
Ан çут эс çурта Сар хĕвел тухнă чух ........................................ 259
Ан макăр, тăванăм, – куçу пăсăлать ........................................ 260

## НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

### Астивсе илмелӗх


Анне каланийӗ килет асӑма ........ 261
Турра та ҫӑмӑл мар пире савма ........ 262
Мӗнле тӗнче ку?! – йӑлт аптрамалла ........ 263
Кӗр кунӗ! Акӑ, ӳкрӗ хыҫӑма ........ 264
Каллех? Каллех, унчченхиллех, тӗнче ........ 265
Йӑлтах тулевлӗ тӗнчере, эй-эй ........ 266
Мала анчах, мала! Таса вӑрҫа ........ 267
Тавах турра – шӑвать-ха ерипе ........ 268
Тӗнче – Багдад пасарӗ темелле ........ 269
Ҫӗрме пуян вӑраххӑн ватӑлать ........ 270
Паллах, сана сунмастӑп эп кӗтрет ........ 271
Элле каллех! Историн аташса ........ 272
Тепӗр хут ҫуралаймастӑп ........ 273
Сан пӗр тӗллев ҫак ӗмӗрте ........ 274
Каҫ пулчӗ те – чинлӑ ҫынсем ........ 275
Тавӑру – ҫӗнтерет вилӗме ........ 276
Хуралҫӑсӑр патша иккен илеч ........ 277
Епле чее хӑшпӗрисем тата ........ 278
Вылямалли тесеччӗ ылтӑна ........ 279
Тӗнче мыскарине кӑшт хӑнӑх та ........ 280
Усал сӑмах кӗрет сӑмах шутне ........ 281
Ҫырта-ҫырта пӑрахнӑ улмана ........ 282
Ҫылӑхлине – вӗри ҫавра ҫатма ........ 283
Пурнӑҫӑмра чӑтма ҫук йывӑр чух ........ 284
Йӑпӑлтатас йӑла-йӗркесене ........ 285
Кам ӑнлантарӗ чун мӗн иккенне ........ 286
Ялан ан чав эс чӗрӗ ҫӑлкуҫа ........ 287
Хура пустав хӗвел пайӑркине ........ 288
Пурнасшӑн пуль виҫ ӗмӗр хӑшӗсем ........ 289
Ултавҫӑсем ӗлӗкренех чысра ........ 290
Кӑштах пулсан та тӗпренет чӗре ........ 291
Мӗн чухлӗ илнӗ пулнӑ, ҫавӑн чуль ........ 292
Епле?! – тӗлӗнет мана вилӗм сунанӗ ........ 293
Шурӑ пӳспе, пӗлиспе чӗркесе вырттарар-и ........ 294
Текех ан калӑрсамӑр, тетесем ........ 295
Ах, лавр кӑшӑлӗ – асаилӳ ........ 296
Асаттесен вӑхӑтӗнчех ........ 297
Пӳртре те тӗксӗмленчӗ, тӑварланчӗ ........ 298

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

## Астивсе илмелӗх


Сӳнсе пыракан хӗвеле анӑҫран ........................................ 299
Каллех эп ҫапӑнсассӑн кӗтесе ........................................ 300
Поэт, поэт! Синкер влаҫ умӗнче ........................................ 301
Ҫӑлкуҫ ҫине кам хунӑ йывӑр чул ........................................ 302
Чи кӗвӗҫ чунлӑ халӑх кам тесен ........................................ 303
Ытлашши юратмарӑм-и эпӗ сана ........................................ 304
Сар савӑнӑҫ ҫул иртнӗҫем сӳнсе ........................................ 305
Эпир ҫак тӗнчене мӗскершӗн килнӗ ........................................ 306
Ҫын вырӑнне эс йышӑнатӑн тейӗн ........................................ 307
Мухтавлӑ Хӗвелтухӑҫ ывӑлӗ, Омар Хайям ........................................ 308
Тавралӑхӑм тытать-ха тӑптӑма ........................................ 309
Ахах пӗрчине хутӑм ҫутӑ ҫине ........................................ 310
Уй-уяв! Кӗтсе илтӗм сана эп аран ........................................ 311
Туре пек ҫут тӗнче те йӑнӑшать ........................................ 312
Эп савӑнса, пӗр чӗптӗм вӗчӗхӳсӗр ........................................ 313
Йӗрсе ҫуралнӑ чух эп ҫак виҫесӗр ........................................ 314
Туссене тупаҫҫӗ теҫҫӗ ҫамрӑк чух ........................................ 315
Тархасшӑн калӑрсамӑрччӗ манна ........................................ 316
Ӑҫта ӗмӗрлӗхе тесе шутланӑ ........................................ 317
Сенкер шӑрҫа ҫумне сенкер ахах ........................................ 318
Мана курсан эрнипелех пӗр йӗксӗк ........................................ 319
Ма хӑрас вилӗмрен ........................................ 320
Пӗр ҫылӑхлӑ тееҫҫӗ ухмаха ........................................ 321
Хутла пӗлен ҫынна сума сӑвас ........................................ 322
Ҫур килчӗ те кӗркуннепе каять ........................................ 323
Чун хушшинче йӑл илнӗ чун-чӗремӗн ........................................ 324
Тумхахлӑ ҫулпа ҫӳресе эп ӗшентӗм ........................................ 325
Паян – пурне те ӗненетӗп ........................................ 326
Камран килет, мӗнрен? – шутлан, минрен ........................................ 327
Ҫут уйӑх айӗнче хура вӑрман ........................................ 328
Кашнийӗн хӑйӗн хакӗ: вилӗме ........................................ 329
Ан калаҫ, ан пайла хӑвна ҫеҫ тивекен телейне ........................................ 330
Гегель пек ӑслӑ пулсан та ан хӗсӗрле эс чунна ........................................ 331
Вӗҫевӗ пур пек, кайӑкӗ хӑй ҫук ........................................ 332
Кӑмрӑкланать шап-шур ҫурта ҫиппи ........................................ 333
Такӑнсан та ан ылхан эс, укҫалла илмен куна ........................................ 334

*Николай Исмуков*

# О ТРАГИЧЕСКОМ СМЫСЛЕ БЫТИЯ

*Избранные*

Том четвертый

Редактор *В. Кервен*
Художественный редактор *А. Кокель*
Компьютерная верстка *Л. Богатеевой*
Корректор *М. Злобина*

Подписано в печать 17.10.2006. Бумага офсетная.
Формат 84x108 $^1/_{32}$. Гарнитура «Таймс». Печать офсетная.
Усл.-печ. л. 17,0. Тираж 500 экз. Заказ № 141. Цена свободная.

Отпечатано с готового оригинал-макета.
Издательство «Новое время».
428034, г.Чебоксары, ул.М.Павлова, 50/1.